ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6 +

37 (4399) №, 2014, авăн, 11 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ÇĔНĔ ĂРУ

# Ыра кăмăллăхне вăл йывăççенчен, ÿсен-тăранран илнĕ



Юмахри пек сарă кун тăрать. Çакна май Кольăн чун-чĕрине çутă-çутă хаваслă туйăм хăпартлантарать. Вăл автобус чарăнăвĕ енчен васкамасăр килĕ еннелле утрĕ. Хитре вăхăт, вăрман, уй-хир уçлăхĕ, хавхалантарса та çĕклентерсе, ырă тĕлĕке аса илтерчĕ ăна. Хулари тĕтĕмлĕ, тусанлă сывлăш хыççăн çакăн пек илĕртекен вырăнта – тăван кĕтеспе – утма мĕн тери аван! «Уйрăмах тата тăван ялта, тăван килте кĕтекен анне пулсан», – терĕ вăл хăй ăсĕнче.

Çутă куна ытараймасăр малтанах, киле кĕриччен, çывăхри плотина хĕррине пырса ларчĕ. Пĕр хум та хускалмасть пĕве çинче. Темиçе тĕлте шыв качакисем месерле ÿкнĕ те ниепле те çаврăнаймасăр тапкаланса илеççĕ, каллех лăпланса выртаççĕ. Çыран хĕрринерехри хăях шыв тĕпĕнчен темĕнле чĕр чун пырса перĕннипе тайăлса тÿрленчĕ. Шыв çине нăрă пек хура кăпшанкăсем палт! сиксе тухаççĕ те сывлăш çавăрса илнĕ хыççăн каллех чул пек аялалла анса каяççĕ. Акă пĕве вĕçĕнчен мăшăр кăвакал чĕпписене ертсе тухрĕ. Вĕсем вĕçĕмсĕр тĕрлĕ саслăн нартлатса-шиплетсе шывра тем шыраса Коля ларакан еннелле çывхарчĕç.

– К-ш-ш! Кă-ш-ша! – терĕ çамрăк аллисемпе сулкалашса.

Хайхискерсем ăна курмарĕç те, илтмерĕç те тейĕн, шав малалла ишрĕç. Коля пĕчĕк тăпра илсе кăвакалсен еннелле вăркăнтарчĕ. Муклашка вара самантрах шыв айне анса кайрĕ.

– Эх, ку муклашка хăратса та ĕлкĕреймерĕ çав нарт-нартсене, тÿрех путрĕ, – терĕ те арçын ача хăй сăмахĕнчен хăй шикленсе ÿкрĕ. – «Путрĕ» сăмахпа усă курма пачах та юратмастăп, маншăн усал чир пекех вăл. Шиклентерекенскер, чуна ыраттараканскер. Çурăм тăрăх сивĕ тар чуптараканскер.

Акă пĕлтĕрхи çуллахи вăхăтăн пĕр кунĕ куçĕ умне ярт! çеç шуса тухрĕ... «Ах, аса илес килмест вăл куна... Мĕншĕн яланлăхах манăçмасть-ши çав кун? Пĕрре çывăрса тăрасчĕ те ун пирки йăлтах манасчĕ», – терĕ çамрăк пуçне икĕ аллипе сăтăрса. Çук çав...

Хулара пурăнакан пиччĕшĕ Гена яла килни Кольăшăн хăйне евĕр уяв пулчĕ. Иккĕшĕ кил-тĕрĕшри ĕçсене пурнăçланă хыççăн кăнтăрлахи апата пÿрте кĕчĕç. Амăшĕ янтăланă кукăльпе сăйлансан канмалла тесе компьютер умне вырнаçрĕç. Пĕр-пĕриншĕн тунсăхланă пĕр тăвансем шăкăл-шăкăл калаçнă вăхăтра сасартăк урамран такам хыттăн кăшкăрчĕ.

➲➲➲ 2-мĕш стр.

1-мĕш стр.

# Ырă кăмăллăхне вăл йывăçсенчен, ӳсен-тăранран илнĕ

## Харсăр çăлавçă

– Коля! Коля-я-я тетĕп! Тух-ха, тух! – тесе чĕнни пиччĕшĕпе шăллĕне пăлхатса янă.

Коля чăнах та ырă мара сиссе урама сирпĕнсе тухнă. Арçын ача хӳхленине кура ун умне пĕшкĕннĕ.

– Мĕншĕн макăратăн эсĕ? – ыйтнă вăл ăнланаймасăр унталла-кунталла пăхнă май. – Ан макăр... Кам тивет сана?

– Веня! Веня шыва путрĕ-ĕ! Путрĕ вĕт-ха! Мĕнпе те пулин пулăш-ха ăна!

Хăйсенчен аякра мар плотина патне çиçĕм пек хăвăрт çитнĕ те тум-юмне хывма тытăннă яш. Анчах кун пек вăхăтра кашни çеккунт хаклине шута илсе тӳрех шыва сикнĕ.

Шыв айне темиçе хут ансан та, çук, тупайман вăл арçын ачана.

– Ак çакăнтарах, хĕрринерех ӳкрĕ вăă-ăл... – тенĕ сулă çинче ларакан арçын ача чĕтрекен аллисемпе питне хупласа.

Шăп çав вăхăтра шыв çийĕн Веньăн ӳчĕ ярăнса тухнă. Вăхăта сая ямасăр Коля ăна сулă çине хурса çыран хĕрринелле васканă. Арçын ачана шывран пĕччен йăтса тухаймасса ăнланса пиччĕшне Генăна чĕнсе илнĕ. Курăк çине вырттарнă кăвакарса кайнă ача пĕр сасă та паман. Лĕнчĕр кайнă кĕлетке вилнĕ пек выртнă. Кӳрше хуларан тухтăрта вăй хуракан кĕрӳшĕ килнине аса илсе пулăшу ыйтма унта васканă. Хайхискер пĕрремĕш пулăшу парсанах Веня сывласа янă, питне хĕрлĕрех сăн çапнă та, кăшкăрса макăрса янă. Унтан чуна çӳçентермелле чыхăна-чыхăна макăрнă. «Васкавлă пулăшу» машини чĕнсе инкеке лекнĕскере больницăна ăсатнă.

Капланса килнĕ куççульне чарас тесе тăрăшнă Коля, тутисене çыртса айккинелле пăраннă. Хăй сив чир тытнă пек чĕтреме тытăннă.

– Мĕн пулĕ-ши ĕнтĕ халĕ Веньăпа? Çăлĕç-ши ăна тухтăрсем?

Вăхăт мĕн чухлĕ иртнине тавçăрса илме пултарайман Коля. Те çур сехет, те пĕр сехет, те унтан та ытларах... Çав вăхăтра хăйне тĕлĕкри пек çеç туйнă саккăрмĕш класс вĕренсе пĕтернĕ арçын ача.

Кольăна пурте тав сăмахĕ каланă. Анчах вăл кĕскен çеç:

– Ман вырăнта кирек кам пулсан та Веньăна шывран туртса кăларатчех. Эпĕ нимĕнле паттăрла ĕç те туман. Урăхла каласан, çынна йывăр вăхăтра пулăшасси – кирек камăн тивĕçĕ. Çын çынсăр пурăнаймасть вĕт, – тенĕ лăпкăн çеç.

Тĕрĕссипе вара, плотинăра акă мĕн пулса иртнĕ. Виçĕ арçын ача, ишме пĕлменскерсем, никамран ирĕк ыйтмасăр шыва кĕме васканă. Иккĕшĕ, хăюллăраххисем, сулăпа ярăнма шут тытнă. Пĕри, вĕсемпе кĕме килĕшмен, çыран хĕрринчех ларса юлнă.

Акă Веня ăнсăртран сулă çинчен ӳкнĕ. Шывра шампăлтатаканскер пулăшу ыйтса кăшкăрнă. Анчах тавралла аслисенчен никам та пулманран ăна çав самантра алă тăсса паракан тупăнман. Çыран хĕрринче ларакан арçын ача такăна-такăна Коля патне чупнă...

## Аслисен сăмахне ăша хывмасан...

Турра шĕкĕр, тухтăрсем Веня пурнăçне çăлнă. Апла пулин те çак пăтăрмах хыççăн чылай вăхăт лăпланаймасăр çӳренĕ Коля. Ара, сакăр çул каялла пулса иртнĕ пулăм тата хăрушăрах вĕçленнĕ-çке уншăн. Çав инкек пирки аса илсен халĕ те чĕри хĕссе ыратать унăн. Куляннипе пуçне аллисем çине хурса ăвăс çулçи пек чĕтренни те пĕрре мар пулнă. Ара, чун ыратăвĕ, темиçе çул иртнĕ пулсан та, лăпланма мар, пушшех вăй илсе хăй çинчен аса илтерсе тăрать-çке...

...Вăл кун Коля та ытти ачасемпе, пĕве хĕррине аслисемсĕр кайма юраманнине мансах, шыва кĕме васканă. Акă хаваслăн, çуйхашса пĕр-пĕрин калаçăвне пӳлсе пăлартнă вырăна çитнĕ те. Çиччĕн пулнă вĕсем, пĕри те ишме пĕлмен пулин те хавхаланса шыва сикнĕ. Çапла киленнĕ вăхăтра Кольăн иккĕмĕш сыпăкри шăллĕ Валера, çав çулхине пĕрремĕш класа кайма хатĕрленнĕскер, сасартăк кăшкăрса янă.

– Путатă-ă-ăп! Пулăшă-ă-ăр!

Пурте хăраса ӳкнĕ. Вĕсенчен виççĕшĕ, сехĕрленнĕскерсем, тӳрех ялалла тапса сикнĕ. Тепĕр виççĕшĕ, çав шутра Коля та, çыран хĕрринче кăшкăрса макăрнă. Сывăхра аслисем пулманран куç умĕнчех путнă Валера...

– Ун чухне хам та пĕрремĕш класс кăна пĕтернĕ, вăйсăр та хăравçă пулнă çав. Шăллăма пулăшма пултарайманшăн паянхи кунччен ӳкĕнетĕп. Ах, ун чухне кăшт аслăрах пулнă тăк, ăна çăлаттăмах. Ытти çулсенче Валера патне час-час масара çӳренĕ. Çимĕкре те, çуралнă кунĕнче те. Е тепĕр чух вил тăприне тасатма, е ахаль çеç кĕрсе тухнă. Çимĕк... Чи хӳхĕм вăхăт... Хĕвел çĕре савса пăхать. Мĕн пур кайăк çак вăхăтра юрлать. Мĕн пур курăк-чечек сарăлса çитĕнет. Пирĕн Валера çав илеме урăх курма пултарайманшăн чун ĕсĕклет. Халĕ çăва çинче сахалтарах пулма тăрăшатăп. Ман çине йăл кулăллă Валера тинкернине пăхма пултараймастăп. Кӳсра куççуль капланать. Пĕрле ӳкерттернĕ сăн ӳкерчĕксене те сайра хутра çеç алла илетĕп. Вĕсене пăхнă май чунăм пушшех хурланать, чĕре ыратса сикет. Унăн вилĕмĕшĕн хам айăплă пулнă пек, ырă мар туйăм чуна шĕкĕ евĕр кăшлать. Эх, манран пĕр çул çеç кĕçĕнскерĕн пурăнмалла та пурăнмаллаччĕ. Аннен йăмăкĕ тепĕр чух ман çине куççульпе пăхса: «Ах, пирĕн ывăл та сан пекех пысăкланатчĕ ĕнтĕ», – тени пушшех чĕрене çурать. Ăна мĕн тери йывăр пулнине анчахрах ăнланма пуçларăм. Чечек йăтса, çурăм хыçне сумка çакса хаваслăн шкула васкамалли вăхăтра çĕр айне кĕрсе выртрĕ вĕт-ха унăн тĕпренчĕкĕ... Ача чух шухă пулнă, шухăшсăр çӳренĕ пулĕ çав. Аслисем ăса вĕрентсе каланине те тӳрех ăша хывасшăн пулман ахăртнех. Вĕсене итлесе çав кун шыв хĕррине кайман пулсан... Кăçал Валера та 15 çул тултармаллаччĕ. Манăн «Тантăш» хаçат вулаканĕсене çакна асăрхаттарса калас килет. Шывăн турачĕ çук тени тĕрĕссех, çавăнпа аслисемсĕр, тархасшăн, пĕве хĕррине ан кайăр. Эпир тӳснĕ инкеке сирĕн курмалла ан пултăрччĕ. Çывăх çынна çухатассинчен хăрушă пулăм çук та, – терĕ Канаш районĕнчи Вăтакас Кипеч ялĕнче пурăнакан Николай Константинов ассăн сывласа.

Çак пулăм хыççăн вăл чылайччен тĕлĕкри пек çӳренĕ. Канăçсăр шухăшсемпе çĕр варринче сике-сике тăма та, кунĕпе хырăм выççине туймасăр пӳлĕмре ларма та пултарнă. Килтен те сайра тухкаланă. Кĕнеке тытнă – ăна вулаймасăрах пăрахнă. Чунĕ чăтăмсăррăн Валерăна кĕтнĕ. Пӳлĕме халь-халь вăл кĕре тăрассăн туйăннă. Анчах та... ыран та иртнĕ, тепĕр кун та... таврăнман Валера вĕсем патне.

## «Кролик какайĕ тутлă теççĕ... çисе курман-ха»

Тăххăрмĕш класс хыççăн Канашри 16-мĕш училищĕне вĕренме тухса кайрĕ Коля.

– Хăвăртрах пысăкланас килет мана. Каменщик-сварщик профессине алла илсен укçа ĕçлесе илме тытăнатăп та-ха, – тет вăл ĕмĕтленсе.

Кашни кунах киле çӳрет вăл. Капла амăшне тĕрлĕ ĕçре пулăшма тӳр килет.

– Атте аякри хулана ĕçлеме çӳрет, пичче Канашра вăй хурать. Çавăнпа та кил-тĕрĕшре кăштăртатмалли тупăнсах тăрать. Алла пăчкă-пуртă тытма, пăта шаккама атте вĕрентрĕ. «Ас ту, çиччĕ виç те пĕрре кас хăма таврашне», – тетчĕ ĕçлеме пуçламассерен. Халĕ кирек епле ĕçре те хам тĕллĕнех тăрмашатăп. Авă чӳрече умĕнчи йывăç çине те сырăш ăсталаса çакрăм. Хĕллесерен унта пырса апатланакан кайăксем çине пăхса савăнатăп. Апатне куллен хурса тăрататăп, – тет Коля хавасланса.

Çитес вăхăтсенче кролик усрас шухăшлă вăл. Унччен читлĕхне, вĕр-çĕннине, туса хатĕрлесшĕн.

– Малтан пирĕн картишре кроликсем чупатчĕç-ха. Какайне те пĕçерсе çирĕç килтисем. Питĕ тутлă терĕç. Эпĕ вара... пултараймарăм унăн ашне тутанма. Шел-çке. Хăв пăхса çитĕнтеретĕн те... кайран юратса çимелле-и? Манран пулмасть... Пĕррехинче анне сĕтел çине чăх какайне лартса парсан савăта тӳрех айккине шутарса лартрăм. Ара, вĕсене те хĕрхенетĕп эпĕ. Ача пек пăхса ӳстеретĕн те... кайран хуранра вĕретмелле-и? – тет Коля шухăша путса.

Тата тепĕр ĕмĕт те пур-ха унăн. Нимĕç овчарки туянса тĕрлĕ командăна вĕрентесшĕн.

– Анчах халех мар. Килте ахаль йытă пур. Ăна ăçта хумалла-ха? Вăл кил хуралçи, ку таранччен пурăннăскере пăрахăça кăлармастăпах ĕнтĕ. Кайран овчарка туянсан ăна çынна йывăр вăхăтра пулăшмаллине те вĕрентĕп. Йытă – çыннăн шанчăклă тусĕ тесе ахальтен каламаççĕ. Чăнах, вăл сана нихăçан та сутмасть, – тет Коля хавхаланса.

Вăтакас Кипеч... Çапла, çак тăрăхра çуралнă паттăр Коля. Ырă кăмăллăхне те вăл çак çĕртен-шывран, йывăçсенчен, ӳсен-тăранран илнĕ ахăртнех. Сăпайлăхне те кайăк юррисем, шевле чӳхенĕвĕсем, чечек шăршисем парнеленĕ тĕр. Сăмахне те çиччĕ виççе калаçать, ватăпа – ватăлла, çамрăксемпе – çамрăкла.

– Кукамай çапла вĕрентнĕ мана. Шел, ăна та кăшт çеç ас тăватăп. Мана валли унăн кĕсийинче ялан канфет пурччĕ. Кирек хăш вăхăтра та вăл кучченеçпе хавхалантаратчĕ, – тет хастар çамрăк çаплипех хăй шухăшĕпе паллаштарнă май.

...Ирсерен, хĕвел тухиччен, темиçе сехет те пулин плотина еннелле вăлта йăтса утать вăл. Вăлтасемпе ларассинчен пысăкрах савăнăç уншăн урăх çук та пулĕ хальлĕхе. Тĕрĕссипе, тепĕр чухне пулли те кирлĕ мар Кольăна. Ирхи пĕве илемĕ, пулăсем выляни, вăлта хулкки йĕкĕлтесе чӳхенни ытларах килентерет те ăна.

*Элиза ВАЛАНС.*

Канаш районĕ,
Вăтакас Кипеч.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР тивĕçĕсене пурнăçлакан – Г.А.МАКСИМОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОРШĂН Л.ВАСИЛЬЕВА

● НОМЕР ВУЛАВÇИ Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1525 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 3427
Пичете авăн уйăхĕн 10-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

Тантăш
37 №, 2014, авăн, 11



# Чăваш ятне тĕнче уçлăхне çити çĕкленĕ Андриян Николаев çуралнăранпа – 85 çул!



**Авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче СССР космонавт-летчикĕ, авиаци генерал-майорĕ, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ, ЧР Хисеплĕ гражданинĕ Андриян Григорьевич Николаев çуралнăранпа 85 çул çитрĕ. Виççĕмĕш космонавта, Чăваш Енĕн мухтавлă ывăлне асăнса шкулсенче уçă уроксем иртрĕç, класс сехечĕсем тата ытти кăсăклă мероприяти пулчĕ.**

Çав хĕвеллĕ кун Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ялĕ кĕрлесе кăна тăчĕ. Республикăри çамрăк космонавтсем ЧР Пуçлăхĕпе М.В. Игнатьевпа тата хисеплĕ хăнасемпе пĕрле савăнăçлă митинга хутшăнчĕç. Тӳпере вара самолет явăнса çӳрерĕ.

Шуршăл вăтам шкулĕн «Восток» отрячĕн вĕренекенĕсем А.Г. Николаев СССР космонавт-летчикĕн асăну комплексĕпе паллаштарчĕç. Çĕмĕрлери 6-мĕш шкулти «Кондор» отряд вара Шуршăла çити çупу ирттерчĕ.

Пуханнисем космонавт вил тăприйĕ çине чечек хунă хыççăн Сĕнтĕрвăрринчи, Шупашкар, Çĕрпӳ районĕсенчи тата Çĕнĕ Шупашкарти çамрăк космонавтсен отрячĕсем хăнасем умĕнче мухтавлă ентешĕмĕре халалланă флешмоб лартса пачĕç. Ун хыççăн Шуршăл шкулĕнче «Тĕнче уçлăхĕнчи çул çӳрев» вăййă иртрĕ. Ачасем хăйсем мĕн пĕлнине çичĕ планета-станци çинче кăтартса пачĕç: «Тăван ен», «Уйăхлăнди», «Альфацентавра», «Конструкторсен», «Паллă мар планета», «Кроссворди». Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Приволжск шкулĕнчи «Хăмăрт кайăк» отряд пĕрремĕш, Шупашкар районĕнчи Тутаркассинчи «Çăлтăрлă çул» иккĕмĕш, Çĕнĕ Шупашкарти 13-мĕш шкулăн «Çăлтăрлă патруль» тата Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси шкулĕн «Вега» отрядсем виççĕмĕш вырăна тухрĕç. Кашнин кăмăлĕ çĕкленӳллĕхпе тулчĕ. Çакăншăн «Юнитекс» центра тав тумалла.

Андриян Николаевăн хĕрĕ Елена Терешкова-Николаева тата çывăх юлташĕсем – космонавтсем – ачасен асĕнче юлмалли, малашлăха çутатмалли нумай ырă сăмах каларĕç.

*Елена Андрияновна Терешкова-Николаева:*



*– Чăваш Ене килнĕ чухне кашнинчех питĕ хумханатăп. Паян вара çак туйăм икĕ хут вăйлăрах. Мĕншĕн тесен пысăк уява пухăнтăмăр. Атте 85 çул тултарать. «Тултарĕччĕ», – тесе калама хăяймастăп. Маншăн вăл яланах чĕрĕ, ĕмĕрех пурнăç палли пек курăнса тăрĕ.*

*Пĕлетĕр-и, хăш чухне Шупашкара килетĕп те – пĕлĕтлĕ, çумăр çукалать. Шуршăла çитсенех вара тӳпе çуталать, хĕвел пăхса ярать. Атте эпир ун патне пырса çӳренишĕн савăнать. Курăр-ха, паян мĕнле çанталăк! Ĕнер кăна сивĕччĕ, çумăр çăватчĕ. Паян вара тивлетлĕ чăваш çĕрĕ çинче ял çыннисем çеç мар, аттен чи çывăх юлташĕсем те пуçтарăнчĕç. Вĕсем – космонавтсем – йывăр та мухтавлă çула пĕрле парăнтарнă. Çавăнпа та паян атте питĕ-питĕ савăнать пуль тетĕп. Хăй чăваш çĕрĕ çинче çуралнипе питĕ мăнаçланатчĕ вăл. Тăван чĕлхине нихăçан та манман. Чăваш Ене килсен е Мускавра ентешсене курсан вĕсемпе яланах чăвашла калаçатчĕ.*

*Ачасем, сирĕн пурнăç пуçланать кăнаха. Ĕçе юратма, малалла ăнтăлма сунатăп сире! Халĕ темĕн те пур, сирĕн умăрта нумай-нумай çул уçăлать. Хăвăрăн çулăра тупăр та унпа хăюллăн утăр, манăн атте пек. Вун тăватă çулта вăл Сĕнтĕрвăрринчи вăрман хуçалăх училищине вĕренме кайнă, ун хыççăн Вĕçев училищинче пĕлӳ илнĕ. Куратăр-çке, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн мĕнлерех шая çитрĕ вăл, çĕр-шывра çеç мар, пĕтĕм тĕнчере паллă çын пулса тăчĕ. Сире те çавăн пек ăнăçу сунатăп! Мĕншĕн тесен эсир – чăвашсем – темĕн тума та пултаратăр!*

***Алексей Архипович Леонов:***

*– Хаклă чăвашсем! Эпир çеç мар, пĕтĕм тĕнче сире тахçанах пĕлет. Йăлтах Андриян Николаева пула.*

*Халĕ вара ачасене калатăп. 1944 çулта шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Андриян техникума çул тытнă. Анна Алексеевна ăна тăватă çĕр улми панă. Макăрмалла! Арçын ача килĕнчен пĕр пуссăр кайнă: сумкăра тăватă çĕр улми тата тăватă кĕнеке çеç. Çак çыннăн паттăр пурнăçĕ акă мĕнрен пуçланнă! Пурнăçра пĕтĕмпех хăвăн тăрăшса туптамаллине вăл никамран лайăх ăнланнă. Ашшĕпе амăшĕ ăна пурнăç тата çирĕп сывлăх панă. Ку чăн. Малалла вара хăйĕнех тăрăшмалла. Тăватă çĕр улмирен çапла пуян пурнăç патне çитнĕ.*

*Ачамсем! Эпĕ 1980 çулта Андриянпа пĕрле конкурса килтĕм, иксĕмĕр мĕн пур*



*йывăрлăха тӳссе ирттертĕмĕр, конкурс витĕр тухрăмăр. Унччен вара вăл стрелоксен шкулĕнче вĕреннĕччĕ. Андриян нихăçан та уроксене сиктермен, «тăваттă» тата «пиллĕк» паллăсемпе çеç вĕренетчĕ. Çĕр-шыври тĕп инженери шкулĕнчен «пиллĕксемпе» вĕренсе тухрĕ, диплом илчĕ. Кайран вара Андриян Николаев Павел Поповичпа космоса вĕçрĕ. Пирĕн çĕр-шыв палличчĕ вăл! Патшалăх шанăçне иккĕшĕ те тӳрре кăларчĕç. Тепĕр вĕçевĕ – Севастьяновпа пĕрле. Вăраха тăсăлнă пĕрремĕш вĕçев – вун сакăр талăк. Сывлăхĕ çирĕп пулни çăлса пычĕ ăна. Куншăн вара ашшĕпе амăшне тата чăваш çĕрне тав тумалла!*

***Петр Ильич Климук:***

*– Çак ялта эпĕ вун пилĕк çул пулман. Андриянпа иксĕмĕр шăпах музей уçнă кун килнĕччĕ. Паян Чăваш Ен аталансах пынине куратăп. Кунта килнĕ чухне пирĕн çĕр-шывра çавăн пек республика пурришĕн мăнаçланатăп. Вăл чăннипех те мухтава тивĕç.*

*Эпир Андриянпа службăра та, ĕçре те пĕрлеччĕ, Çăлтăрлă хулана та пĕрлех турăмăр. Пурнăç вĕресе тăратчĕ унра. Вăл яланах çынсем хушшинчеччĕ. Пĕтĕмпех хăй пурнăçлатчĕ, питĕ пултаруллăччĕ. Маншăн Андрян Григорьевич яланах – çĕр-шывăмăрăн мухтавĕ, чысĕ.*

*Тӳрĕ кăмăллă, тĕрĕслĕхлĕ пулăр, Андриян Григорьевич Николаевран тĕслĕх илĕр!*

Зоя Степановна Антонова – Асăну комплексĕн тĕп сыхлавçи. Вăл кунта тахçанах ĕçлет, музейри кашни япалашăн явап тытать.

– Ачасене ытларах космонавтсем мĕн тата мĕнле çини интереслентерет, – каласа парать вăл. – Малтан космонавтсен кабинĕсем пĕчĕк пулнă вĕт-ха. Унта çын вырнаçма пултарни те тĕлĕнмелле. Çавăнта мĕнле чăтнă-ха вĕсем? Хăшĕ-пĕри вара: «Космонавт пулас тесен мĕн тумалла-ши?» – тесе ыйтать. Кăçалхи экскурсисенче эпир Андриян çинчен ытларах каласа пама тăрăшрăмăр. Унăн икĕ вĕçевĕ çинчен тĕплĕнрех ăнлантартăмăр. Эпир Андрияна кăна мар, ытти космонавтсене те кăтартатпăр. Тата космосра мĕнле карапсем пулнине те пĕлтеретпĕр. Малтан вĕсем, «Восток» текенскерсем, ултттăн пулнă. Кайран «Восход» ятлисем, вара «Союз» текен 40 космос карапĕ вĕçтерсе янă. Унтан «Союз Т» текеннисем 14 карап. Ун хыççăн – «Союз ТМ». Халĕ вĕçекенсем вара «Союз ТМА» – тата маларах кайнисем.

– «Çамрăк космонавтсен отрядне йĕркеленин усси пур-ши?» – иккĕленет хăшĕ-пĕри. Паллах, пур. Хуравне вара тĕслĕхпе çирĕплетсех парар. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси шкулĕн çамрăк космонавтсен отрячĕн ертӳçи Надежда Серафимовна Максимова вĕренекенсем хушшинче тĕнче уçлăхĕпе кăсăкланакансем пулнăран чунтан савăнать. Александр Андреев, Владимир Кольцов тата Дмитрий Кузнецов халĕ Питĕрти Можайский ячĕллĕ академире вĕренеççĕ, хăйсен малашлăхне космос ĕçĕпе çыхăнтарасшăн. Ачасем мухтавлă ентешĕн çулĕпе кайма ăнтăлнине ырламалла.

Çак районти тепĕр маттур пике Анна Атласова Шуршăл шкулĕнче вун пĕрмĕш класра вĕренет.

– Пиллĕкмĕш класра чухне эпир çак юхăма çӳрекен аслă класс вĕренекенĕсене сăнама юрататтăмăр, – аса илет Аня. – Пирĕн те вĕсем пек пулас килетчĕ. Çамрăк космонавтсен ретне лекес тесе нарăс уйăхĕнче зачет пама кайрăмăр. Çапла эпĕ хамăн пĕрремĕш значока, «Ĕмĕтленекенсем» ятлине, илтĕм. Ун хыççăн – «Шыракансем», «Ăстаçă», чи çӳллĕ категори – «Çăлтăр». Ку çулла вара «Пуласлăха илсе каякан лифт» ятлă ăслăлăх шкулĕнче пулса курма тӳр килчĕ. Унта эпир Раççейĕн ытти регионĕсенчи ачасемпе тĕл пулса калаçрăмăр. Хамăр проектсемпе паллаштартăмăр.



Аньăна космос питĕ килĕшет. Шкул хыççăн вăл тĕнче уçлăхĕпе çыхăннă техника шкулне вĕренме кĕрес шухăшлă. Мĕнех, пĕрремĕш класранпа «пиллĕкпе» ĕлкĕрсе пыракан хĕр ачашăн чăрмав çук, вăл ĕмĕтне пурнăçа кĕртесех шанатпăр.

Ачасем! Эсир те яланах çирĕп тĕллевлĕ пулăр, Андриян Григорьевич Николаевран тĕслĕх илсе йывăрлăха парăнтарма вĕренĕр, нимрен те ан хăрăр! Сирĕн пуласлăхăр пысăк, ĕненĕр çакна!

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем

# Халва тутантăм паян ир...

Ĕнер Таиç аппа пасартан халва илсе килнĕ-мĕн. Сисмесĕрех юлаттăм-и, тен? Сĕтел çинчи чашăкра курах кайрăм пĕр пĕчĕк татăкне. Паллах, хырăма улталамалăх çеç пулчĕ вăл. Тутлă пулнăран çисе янă ĕнтĕ ăна аппасемпе пиччесем. Тарăхнăран кутăнлашса кăмака хыçне кĕрсе лартăм. Куççуль пĕр чарăнми юхать.

Акă аслă аппанах илер-ха. Унăн мĕншĕн ман çинчен аса илмелле мар? Эпĕ çын мар-им? Пĕлетĕп, пĕчĕк эпĕ. Анчах ӳсетĕп пулĕ-ха çулсем шунă май. Ара, шит тăршшĕ çеç пулнăран хам та тарăхатăп. Çавах нимĕн те тăваймастăп. Галя аппана тата мĕн пулнă-ши? Маншăн хыпса çунаканччĕ вĕт-ха вăл. Кам та пулин кучченеç тавраш илсе килсен яланах икĕ кĕсьене те пĕремĕк-канфет чиксе параканччĕ.

Чим-ха, Люда аппа сиссе юлнă-ши? Ытла та лăпкă вĕт-ха вăл пирĕн. Кам та пулин пырĕ çурăласла кăшкăрсан та хирĕç пĕр сăмах та илтеймĕн. Тепĕр чух танк пек туйăнать мана. Чăнах.

Висĕм кун каçхине клубран таврăнчĕ те тӳрех сĕтел хушшине вырнаçрĕ. Тĕпелте çĕр улми шуратакан анне ĕçне пăрахсах кăмакаран шаркку кăларчĕ.

– Аван, аван. Техĕмлĕ апат çийĕпĕр, – пӳрнипе сĕтеле шакăртаттарнă май пуплерĕ вăл.

– Анне, пĕр курка сĕт пар-ха. Унсăрăн шаркку анмасть, – терĕ аппа йăлăнса.

– Пĕр курка сĕт витрере. Мĕншĕн эсир паян ĕне витине тасатман? – хĕрсе кайрĕ анне самантрах.

Аппа чĕнмерĕ. Чашăкра мĕн пурри-не çисе ячĕ те вăшт çеç сывăрма кĕрсе выртрĕ.

– Ах, çак ача хирĕç пĕр сăмах та чĕнмест-çке. Чĕпĕтетĕп-ха, сассу тухтăр пĕрех хутчен, – лăпланаймарĕ анне çав-çавах.

Çук, тем тесен те Люда аппа халва ас тивсе курайман.

Гена пичче чи нумай çиекенни пулнă ĕнтĕ. Лара-тăра пĕлменскер сывлайми чăмларĕ ахăртнех. Кайран валли тесе кĕсйине те пĕтĕрсе чикрĕ пулĕ.

Çапла, кашни кун кĕсйине мĕн те пулин чиксе таврăнать вăл киле. Урамра тем те тупăнать ун валли: кĕленче ванчăкĕсем, тимĕр-тăмăр, хуçасăр кушак çурисем... Пĕрне те урамра хăвармасть. Каçхине анне ятла-ятла ăс пани те усси çук.

– Пăрах тем те пĕр пуçтарма! – тет пӳрнисемпе юнанă май.

– Ăхă, ăхă, – унпа килĕшенçи пулса пуçне сĕлтет.

Тепĕр кунне вара каллех «мулпа» таврăнать. Пĕр кунхине çунакан кăмакана япала пăрахрĕ те пӳрт ишĕлсе анать пуль тесе сехре хăпрĕ. Тем шаплатса çурăлчĕ. Лайăх тустарчĕç хăйне аслисем. Ун хыççăн пĕр эрне ниçта тухмасăр килтех ларчĕ, урам пирки аса та илмерĕ.

Хамран икĕ çул аслăрах Люба аппа та йăрă-ха. Халвана вăл та тăраниччен çинĕ ĕнтĕ. Ых, вăл та пулин ман çинчен аса илмен. Ун пек чухне кирлĕ-и вара эпĕ вĕсене?

Пĕлтĕр çулла аннен хăрах калушне йытă çури кĕлет айне сĕтĕрсе кĕрсе кайрĕ. Куç умĕнчех. Ним тума та



Даша **МИХАЙЛОВА** (*Йĕпреç районĕ, Çăкалăх*) **ӳкерчĕкĕ.**

пĕлеймесçĕ вĕт! «Шарик!» – тесе йăпăлтатса йыхăрса чĕнсен те усси пулмарĕ. Кайран, чăн та, йытă çури сиксе тухрĕ. Калушсăрах. Вара мана, пĕчĕкскере, кĕлет айне кĕме хушрĕç. Каланине итлемелле ĕнтĕ.

– Уй, ăслă йытă пекех эсĕ, – терĕç кайран мана аппасем.

Кӳрентĕм. Тутана тăсрăм.

– Каллех кирлĕ мар пултăм иккен, – тесе пӳрте кĕрсе кайрăм. Тепре ĕç хушчăр-ха, калаçмăп вĕсемпе.

Халва çиес килет манăн. Питĕ. Аннене каçхине хам шухăша вăрттăн пĕлтерес пуль. Кĕçех пӳрт алăкĕ уçăлса хупăнни илтĕнчĕ. Таиç аппа! Анчах вăл пӳртре нумай тăмарĕ, сумкине диван çине хурса каялла тухса кайрĕ. Çук, урăхран ахаль тăма хал çитерейместĕп, аллăмсем сумка еннелле кармашрĕç. Тăватă хура çăкăра сĕтел çине кăлартăм. Пĕремĕк те илнĕ Таиç аппа. Маттур! Ман валли халва та туянма манман. Аппасемпе пиччесем киличчен çисе ярас! Пĕрмай хамран култарас мар.

Кирпĕч пек япалана пĕр çăвар çыртса илтĕм. Темĕн, ытла пылаках мар. Сахăрне сахалтарах ярса янтăланă пулас. Пулать ун пекки. Пĕр кунхине аннен çăкăрĕ те тăварсăрччĕ. Пур пĕр çисе ятăмăр, вывăха паман. Ку халвана та перес çуках. Ăна укçа парса туяннă вĕт. Сывлайми чăмлатăп, нумаях марччĕ те.

Акă пӳрте каллех Таиç аппа кĕчĕ. Мана ыталаса юратрĕ те тĕпел кукрине васкарĕ.

– Лисук, çĕпре касăкне ăçта хутăн? – калаçрĕ хайхискер çепĕççĕн.

– Çук, сумкăра курмарăм. Таçта çул çинче ӳкерсе хăвартăн пулĕ, – терĕм ăнланаймасăр.

– Тăн çук çав, ара, çăкăр халĕ епле пĕçермелле-ши? – кулянчĕ вăл ниçта кайса кĕрейми.

Унтан юнашар пырса ларчĕ. Кăмака çумĕнче выртакан халва хутне курчĕ те:

– Акă, акă, çĕпречĕ унта. Ăçта хутăн эсĕ ăна? – ялтах сиксе тăчĕ Таиç аппа.

Çĕр тĕпне анса каяттăм. Пит-куçăм та вĕриленчĕ.

– Халва тесе çисе ятăм. Пĕлмен, – терĕм çăвара аран уçкаласа.

Таиç аппа хыпăнса ӳкрĕ.

– Чирлесе каятăн-и-и-ха. Хырăму ыратмасть-и? – кăсăкланчĕ ман ума пĕшкĕнсе.

– Çу-у-ук! Халĕ хама пушшех лайăх туятăп. Анчах, тархасшăн, çĕпре çинине никама та ан шарла. Кулаççĕ. Калатăпçке, халва тесе...

Таиç аппа ахăлтатсах кулчĕ. Эпĕ те чăтаймарăм, пĕрле култăм. Халĕ çĕпрепе халвана уйăратăп ĕнтĕ. Иккĕшĕ те хăмăр тĕслĕ вĕсем, анчах пĕри тутлă, тепри – йӳçĕ.

# Кăмăллă кукамайпа

Пирĕн касра ватă кинеми пурăнать. Пĕчченех кун-кунлать вăл, вăхăт иртterme тесе мунча умне тухса ларма юратать. Иртен-çӳрене вăйпах чĕнсе илет те калаçтарать вара çапла.

Эпир ăна хисеплесе кукамай тесе чĕнетпĕр. Ачисем виççĕ унăн. Пурте хулара пурăнаççĕ. Сайра килкелеççĕ амăшĕ патне. Çакăншăн мĕн тери кулянать кинеми.

– Мана курас килмест ĕнтĕ вĕсен. Çавăнпа яла çӳремеççĕ, – тет ялан ассăн сывласа.

Кукамая анне те хĕрхенсе ялан вĕри апат пырса çитерет. Пĕр кунхине ун патне кайма черет мана çитрĕ.

– Хырăму та выçрĕ пулĕ, атя-ха сĕтел хушшине вырнаç, – терĕм ăна вырăн çинчен тăма пулăшса.

– Кам ачи пулатăн-ха, паллаймарăм-çке, – тĕсесе пăхрĕ вăл ман çине.

– Аттепе аннен, – йăл култăм савăнăçлăн.

Вăл та кулсах ячĕ.

– Çапли-çапла пулĕ те-ха, анчах вĕсен ячĕсем пурах ĕнтĕ, – кăсăкланчĕ хайхи.

– Петĕрпе Чĕкеçĕн кĕçĕн хĕрĕ, – ăнлантартăм ăна самантрах.

– Э, апла-и? Эсĕ тин çеç сăпкара тапкалашса выртаттăн. Кур-ха, епле ӳссе кайнă! – тĕлĕнчĕ вăл çурăмран лăпканă май.

Апла каланăран вăтансах кайрăм.

– Шкула та çӳретĕн пулĕ-ха? Халĕ каникул тулĕк.

– Пĕлӳ çуртне, кукамай, аван уйăхĕнче пĕрремĕш хут кайăп, – ăнлантартăм васкамасăр.

– Э, апла-и? Çапах та маттур эсĕ, хисеплесе килсе куратăн. Хамăн мăнуксем вара...

Куçĕсем шывланчĕç. Ăна лăплантарас тесе аллинчен тытрăм. Вара сĕтел хушшине лартрăм.

Çак кунран пуçласа вăл мана çывăхран та çывăх çын пек туйăнчĕ. Хăй çав тери тасаскер. Пӳртре те тирпейлĕ. Уявсенче чăваш тĕррилле кĕпе тăхăнса мунча умĕнчи сак çине тухса ларать вара.

Пĕр кунхине вутă çурма касри ачасем пухăнчĕç. Эпĕ те юлмарăм паллах. Кинеми малтан пурне те икшер ывăç канфет пачĕ. Тутлă кукăль çитерчĕ. Ĕç вĕçленсен те çавăн пекех хăналарĕ. Пире вăл çенĕке çитиччен çеç ăсатрĕ, вара алăкне питĕрсе пӳрте кĕчĕ.

Картишре витрери çăмартана асăрхарĕç арçын ачасем. Вара пĕри те тепри шурăскерсене хĕвĕсене чикрĕç.



Оля **ГАВРИЛОВА** (*Йĕпреç районĕ, Çăкалăх*) **ӳкерчĕкĕ.**

Эпĕ те вĕсенчен юлмарăм. Кĕсьене икĕ çăмарта ярăнтартăм та килелле васкарăм. Уçăпсен умне çитсен тăп чарăнтăм. Чим-ха, мĕн тесе кукамая сăтăр турăм-ха эпĕ? Мĕншĕн аслисем хыççăн путсĕрле ĕçе пуçăнтăм? Вĕсем шыва сиксен... Çук, эпĕ апла хăтланас çуках. Çавăнпа вĕçтертĕм каялла. Вăрланă çăмартасене вырăнне хутăм та шăппăн çеç картишрен тухса кайрăм. Ара, çыннăн тем те пулĕ, анчах ыйтмасăр нимĕн те илме юрамасть тесе асанне ялан асăрхаттарать-çке.

– Ватă çынран кулас теççĕ пулас. Ĕнер пĕр витре çăмарта çухалнă. Икĕ чăхха пусма лартса паратăп теттĕм те, пулмарĕ ĕнтĕ халĕ, – кулянса калаçрĕ кукамай вырсарни кун, эпĕ ун патне апат çитерме кайсан.

Пит пĕçерсе кайрĕ. Хĕрелсе кайрăм пулас. Пĕр чарăнми пакăлтатаканскер самантрах шăплантăм. Вара... хăюлăх çитерсе хамăр мĕн хăтланнине каласа кăтартрăм.

– Кукамай, эпĕ шурăскерсене каялла килсе хутăм. Ыттисем – çук. Тархасшăн, каçар, – терĕм кĕç-вĕç макăрасла.

Вăл пĕр хушă шăп тăнă хыççăн:

– Эх, пулмарĕ чĕп кăларасси, – терĕ вăл ассăн сывласа.

Унпа пĕрле чунтан кулянтăм. Ниçта кайса кĕрейми ăш вăркать. Самантрах киле чупса кайрăм. Мĕн пулса иртнине куççуль витĕр аннене каласа патăм.

Эх, тустарчĕ мана анне!

– Тепре çыннăнне мĕн те пулин йăкăртнине курам-ха, вара каçару пулмастех! – терĕ сассине лайăххах хăпартса.

Кайран пĕр витре çăмарта кукамай валли парса ячĕ.

Ватă çын виçесĕр савăнчĕ.

– Юрать çĕр çинче ырă çынсем пур, – терĕ кăмăллăн аннене мухтаса.

Вăхăт иртсен унăн 30 чăх чĕппи тухрĕ. Çакăн хыççăн кинеми патĕнчен тухма та пĕлмерĕм темелле. Каçхине анне илекен пулчĕ.

Кукамай патĕнче пурăнма питĕ кăмăллă. Никам та кӳрентермест, сасă хăпартакан та çук. Акă тата эрне кун пирĕн те кăвакал чĕпписем тухрĕç.

– Халĕ килте те сарăскерсем пур. Вĕсене санăн сыхламалла пулать, – терĕ анне.

Паллах килĕшрĕм. Килтисем ĕçе тухса кайсан 10 кăвакал чĕппине витрене ярса кукамай патне васкатăп. Амăшĕ те манран юлмасть.

Урамра çав тери кăмăллăн ларатпăр. Капла хама та, кукамая та пĕрре те кичем мар. Кăнтăрла анне апат килсе çитерет.

– Кăвакалсем ӳссен тата тутлăрах яшка пĕçерĕпĕр, – тет пире хавхалантарса.

Аван иртеççĕ çуллахи кунсем. Каçпа та лайăх çывăракан пултăм. Килтисем кăна мар, кукамай та çав тери юратать мана. Мĕншĕн тесен эпĕ питĕ кăмăллă ача вĕт!

ПУРНĂÇ ТАТА ЛИТЕРАТУРА

# Поэзи, çамрăклăх, малашлăх...



2015 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ Константин Иванов çуралнăранпа 125 çул çитĕ. Константин Васильевич историе поэт пек кăна кĕрсе юлман. Вăл çавăн пекех – драматург, тăлмачă, прозаик, фольклорист, ӳнерçĕ тата чăваш литературин никĕслевçисенчен пĕри. Унăн пултарулăхне чăвашсем кăна мар, ытти халăх çыннисем те пысăка хурса хакланă, хаклаççĕ, хаклĕç те.

Паллă поэтăмăр çуралнăранпа 100 çул çитнине халалласа Пĕрлешнĕ Нацисен вĕренӳ, ăслăлăх тата культура енĕпе ĕçлекен организацин (ЮНЕСКО) XXV сессийĕнче 1990 çула Константин Иванов çулталăкĕ тесе палăртнă. Унтанпа самаях вăхăт иртнĕ пулин те «Нарспи» авторĕн кун-çулĕпе тата пултарулăхĕпе кăсăкланакансен йышĕ чакман-ха. Пачах тепĕр май, çĕнĕ тĕпчевсемпе ĕçсем кун çути кураççĕ, тавлашу çуратаççĕ.

Тĕслĕхрен, пĕлтĕр кăна Чăваш кĕнеке издательствинче Юрий Артемьевăн «Константин Иванов. Жизнь. Судьба. Бессмертие» кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Архив материалĕсене, аса илӳсене тата çыравçă произведенийĕсене тĕпе хурса, тишкерсе çырнă пысăк ĕç ку. Мĕн çунатлантарнă-ха сăвăçа, мĕн хумхантарнă, такăнтарнă, пăшăрхантарнă? Çак тата ытти ыйту хуравне шырать Юрий Михайлович. Вулаканшăн кăсăклă самант чылай кунта. Яш-кĕрĕмпе хĕр упраçа та интереслентермелле ку кăларăм. Мĕнле туйăмсемпе шухăшсем аптăратнă-ха çамрăк К. Иванова? Мĕн патне туртăннă вăл? Çакна вуласа пĕлсессĕн паянхи яшсемпе хĕрсем, вĕренекенсем хăйсене валли çак ыйтусене хуравлаччăр: мĕн канăçсăрлантарать-ха вĕсене, ăçта тата мĕнле irттереççĕ вĕсем хаклă вăхăта?..

Константин Ивановăн культура еткерĕн пĕлтерĕшне шута хурса, унăн ĕç-хĕлне асăмлă тăвас, халăха литературăна тимлĕх уйăрма хистес тĕллевпе 2015 çула Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕпе килĕшӳллĕн К.В. Иванов çулталăкĕ тесе йышăннă. Сăмах май, вăл Раççейри Литература çулталăкĕпе (2014 çулхи çĕртмен 13-мĕшĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин алă пусса çирĕплетнĕ Указ тăрăх) тӳр килĕ.

Поэтăмăр çуралнăранпа 125 çул çитнине халалласа республикăра та, унăн тулашĕнче те чылай мероприяти иртĕ. Тантăшăмăрсем вĕсене хастар хутшăнасса шанас килет. Тĕрлĕ конкурспа конференцире палăрас тесен вара кĕнекепе туслашмалла. Çавăнпа çитес вĕренӳ çулĕнче те ан уйрăлăр унран. Яланах çĕннине пĕлме тăрăшăр, вулăр, çӳлелле туртăнăр! Кĕнеке сирĕн çывăх юлташăр пултăр, сире вулавпа пĕлӳ тĕнчине ертсе кĕтĕр!

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ тунти кун пуçланчĕ. Тунти кун – эрнен пĕрремĕш кунĕ. Тĕллев лартăр та малалла талпăнăр. Хавхаланса вĕренсессĕн пур йывăрлăха та парăнтарма пулать. Ан ӳркенĕр кăна. К.Иванов пирки ахальтен мар пуçларăмăр калаçăва. Пултарулла та маттур чăваш хастарĕсем паянхи çамрăксемшĕн тĕслĕх пулма тивĕç. Ырă сăнарсене таçта шырамалла мар. Вĕсем хамăр йышранах тухнă, ăс пухнă, пултарулăхне аталантарнă. Пирĕн те вĕсем пек пулма тăрăшмалла, тăван халăх ятне-сумне çĕклемелле. Вара тин ÇЫН ятне тивĕç пулăпăр!

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Кил илемĕ – килĕшӳ

«Çурта лартнипе çурт лартаймăн», – тенĕ ĕлĕкех хисеплĕ шур сухалсем. Чăнах та, çурт-йĕр çавăрасси нихăçан та çăмăл ĕç шутланман. Хăтлă та илемлĕ пӳрт хуçи пуличчен самаях тар тăкмалла. Юрать-ха, халăхра пĕр-пĕрне пулăшас йăла пур. Унсăрăн тата та тертлĕ килмелле. Телее, хăш-пĕр тăрăхра ниме йĕркине халĕ те пăрахăçламан. Ку, паллах, савăнтарать. Ырă тĕслĕхе ыттисем те тĕпе хурсассăн, паха йăлана каялла тавăрсассăн тем пекех аванччĕ... Хавхаланса, пĕр-пĕрне ăнланса çĕлени йывăрлăхсене парăнтарма, тăрăшуллăрах пулма хистет-çке-ха. Кил илемĕ – килĕшӳ. Çакăн пирки самантлăха та манмалла мар.

Нумаях пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче 1000 экземплярлă тиражпа Ренат Харисăн «Илемлĕ çурт» кĕнеки (редакторĕ – Г. Антонова, ӳнерçи – Е. Лютая) кун çути курчĕ. Поэмăна тутарларан чăвашла Раиса Сарпи куçарнă. Е. Лютая художникăн ӳкерчĕкĕсем тетте пек илемлĕ, пăхса ытармалла мар. Сăмах май, автор хайлава Адель, Мадина, Карим ятлă мăнукĕсене халалланă.

Куçару чĕлхи яка та илĕртӳллĕ. Вуланăçем куç умне сăнарсем яр уççăн тухса тăраççĕ. Пурте ĕçе кӳлĕннĕ, çĕнĕ çурт çĕклессишĕн тăрмашаççĕ. Чĕр чунĕсем те çавăнтах тĕпĕртетеççĕ, калăн, вĕсем те этемпе пĕр шухăшлă. Пуш параппан çапнă пек ан пултăр ĕнтĕ. Сире ĕнентерес тесе темиçе çаврине тĕслĕх вырăнне илсе парар:

Йыттăм пулăшрĕ – Акбай,  
Чупрĕ, ăшталанчĕ.  
Ман кушак çури Măймай  
Тарчĕ те пытанчĕ.  
Пĕтĕм ял ура çинче.  
Шӳт-им – çурт тăватпăр!  
Пурте харсăр ĕç çинче –  
Усăсăр тăмастпăр.

Чунне парса вăй хураççĕ поэмăри сăнарсем. Кĕр мăнтăрĕпе вара çĕнĕ çурта хăна-вĕрле пуçтарăнать. «Чаплă çурт! Илемлĕ кил! Пурăнăр телейлĕ!» – ырлăх-сывлăх сунаççĕ пурте кил хуçисене, вĕсемпе пĕрле хĕпĕртеççĕ, ташлаççĕ.

Калуçа, арçын ачана, хайлав тăршшĕпех пĕр ыйту кăсăклантарать – хăçан çурт кил пулса тăрĕ-ха? Çемье праçникĕ хыççăн ирпе хуравне тинех пĕлет ача. Ăна аслашшĕ хыпарлать:

– Ĕнерхи хаваслăх  
Çурт уявĕ пулчĕ те –  
Чуна пачĕ аслăх!

Ĕнтĕ хатĕр çĕнĕ кил,  
Пултăрччĕ вăл тулăх.  
Тусусене чĕнсе кил,  
Мĕн калам эп урăх.

Тус-юлташ, тăван килни  
Килшĕн питĕ ырă.  
Пултăр вăл пурин валли  
Ăшă, çутă вырăн.

Чăннипех те, кил-çурта тус-тантăшпа тăван-пĕтен илем кӳрет. Вĕсемсĕр кирек мĕнле чаплă кермен те савăнтармасть. Унăн капăрлăхĕ те илĕртмест, чунра хаваслăх çуратмасть. Кунашкал пӳрт ĕлккенлĕхĕпе сиввĕн ялкăшса ларать. Хуçисене те ăшăтмасть вăл. Ан тив, çуртăр пĕчĕк те тăвар пултăр. Анчах хăвăр ырă кăмăллă, хăвăнне тараваt пулсассăн унăн çути аякранах курăнĕ, ыттисене хăй патне йыхăрĕ. Тен, пурăна киле пĕрлехи вăйпа çĕнĕ çурт та çĕкленĕ. Мĕншĕн тесессĕн çаврăнăçуллă та маттур ĕçченсене çынсем яланах пулăшма хатĕр.

ЧУНРИ

Ольга ИВАНОВА

## Хурав

Ăсталанăччĕ эп сулă,  
Илĕртетчĕç инçетсем.  
Аллăмра – илемлĕ сулă,  
Ĕмĕтре – сенкер хумсем...

Ман тытас килетчĕ пулă,  
Вĕлкĕшетчĕç парăссем.  
Шел, çыранĕ пулчĕ чуллă,  
Юхса иртнĕ шыв-шурсем.

Пурнăç сулĕ сăртлă-туллă.  
Чăрмавсем – вĕт-шак чулсем.  
Пулмасассăн пит хăюллă  
Парăнмаççĕ çӳл тусем.

«Сăввусем мĕн-ма-ши хурлă?» –  
Шав ыйтаççĕ пĕлĕшсем.  
Ырату çуратмĕ кулă,  
Вăй-хал памĕç сурансем.



Анчах мана мансан, сутсассăн,  
Çук, пултараймăп пурăнма...

## Икĕ чĕре

Ан хăнăхтар хăвна, тархасшăн,  
Ыр сăмахсем те ан кала.  
Куç курмиех санран тарасшăн,  
Пач çаврăнмасăр каялла.

Пĕлетĕп, эсĕ тĕл пуласшăн.  
Чĕрӳ тапать, тен, пăлханса.  
Ирччен çӳресшĕн, калаçасшăн  
Чунна уçса та савăнса.

Сана курсан эп те хаваслăн  
Чĕвĕлтететĕп вăтанса.  
Хумханнипе сывлатăп ассăн,  
Сыв пуллашатăп васкаса.

«Ку, ахăртнех, манран куласшăн», –  
Çапла шутлатăн шăплăхра.  
Куласшăн мар, пĕрле пуласшăн  
Ăнăçура та хурлăхра!..

Эп тем пекех сана шанасшăн,  
Уçасшăн пур вăрттăнлăха.

## Эп çуккă, çук, пулам çуках...

Эп çуккă, çук, пулам çуках.  
Кулянмĕ шутсăр никамах.  
Тен, йĕрĕ хурланса анне,  
Пит хĕрхенсе айван хĕрне.

Эп çуккă, çук, пулам çуках.  
Кусçуль тăкатăп кăлăхах.  
Вăл шанăç кӳмĕ чĕрене,  
Сӳнтерĕ кусăм çутине.

Эп çуккă, çук, пулам çуках.  
Сана кĕтетĕп пустуях.  
Пăлхавлă чунăм çуннине  
Пĕлеймĕн, савăн теприне.

Эп çуккă, çук, пулам çуках.  
Ĕмĕтленетĕп-ха çапах.  
Тен, чĕртĕн шанăç кăвайтне...  
Вара эп килĕп тĕнчене.

Евгений ПЕРМЯК

# Чи лайăххи кам?



Кăçал пĕрремĕш класа кайма хатĕрленекен хĕр ачасем тавлашаççĕ.

– Эпĕ чи лайăх шкул ачи пулатăп! – терĕ Люся. – Мĕншĕн тесен анне мана кĕнекесемпе тетрадьсене йăтса çӳремелли сумка илсе пачĕ!

– Çук, эпĕ чи лайăххи пулатăп! – пӳлчĕ ăна Катя. – Анне ман валли шкула çӳремешкĕн хитре кĕпе çĕлерĕ!

– Çук, çук! – хирĕçлерĕ юлташĕсене Лена. – Сирĕн мĕн пурри манăн пĕтĕмпех пур! Унсăр пусне тата çӳçе çивĕтлеме шурă бантиксем те туянтăмăр.

Çапла темччен тавлашрĕç хайхисем. Юлашкинчен сассисем те пĕтрĕç. Вара тĕрĕслĕх шыраса Маша юлташĕ патне вĕçтерчĕç. Ан тив, чи лайăххине вăл суйлатăр.

Чупса çитрĕç хĕр пĕрчисем тусĕ патне. Маша сĕтел хушшинче букварьне тимлет.

– Кам чи лайăх вĕренекен пулассине пĕлместĕп эпĕ, – хуравларĕ вăл. – Манăн вара паян тата виçĕ сас палли вĕренмелле-ха.

– Мĕншĕн çаплах тăрăшатăн? – тĕлĕнчĕç лешсем.

– Япăх шкул ачи пулас килмест-çке манăн. Апла тăк – тăрăшмалла, – терĕ те Маша каллех кĕнекине вулама пикенчĕ.

Люся, Катя тата Лена тӳрех шăпланчĕç. Чи лайăх вĕренекен кам пулассине ăнланчĕç вĕсем.

# Васкакан çĕçĕ

Митя çĕçĕпе патака касса якатать. Кĕтмен çĕртен ăна айккинелле ывăтрĕ. Кăмăлсăрланчĕ. Лешĕ темшĕн кукăр-макăр та тикĕс мар пулнăран çапла турĕ вăл.

– Мĕнле-ха апла? – ыйтрĕ Митьăран ашшĕ.

– Çĕçĕ начар. Тӳрĕ касмасть, – хуравларĕ ача.

– Çук пуль-ха, – терĕ ашшĕ. – Çĕçĕ лайăх-çке. Ытла васкать çеç. Ăна чăтăмлăрах пулма вĕрентмелле.

– Мĕнле майпа?

– Ак çапла, – ашшĕ патака илсе якатма пикенчĕ. Васкамасăр, ерипен, асăрханса ĕçлерĕ.

Митя ăна тимлĕн сăнарĕ. Хыпаланчăк çĕçĕе чăтăмлăха епле вĕрентмеллине тинех ăнланчĕ вăл.

Тахçанччен тăрмашрĕ вăл çĕçĕне итлеттерес тесе. Лешĕ малтанхи пекех кукăр, тикĕс мар касасшăн, айккинелле пăрăнасшăн.

Çапах та тăрăшни сая каймарĕ – Митя пур пĕрех аллинчи çĕçĕе патака пĕр тикĕс, илемлĕ касма вĕрентрĕ.

# Шанчăклă çын



Хăюллă та çирĕп чунлă Андрюша Рудаков малти партăра ларать. Кĕçĕннисене тăтăшах хӳтĕленĕрен ăна пурте хисеплеççĕ.

Арçын ачапа юнашар пĕчĕк те çинçешке Асьăна лартрĕç. Пĕчĕкскер пулни юрĕ-ха. Унсăр пуçне вăл çав тери хăравçă-çке! Пуринчен те шикленет – йытăсенчен те, хурсенчен те. Кăткăсем те пулин ăна хăратаççĕ вĕт-ха. Андрюша çакна ăнланма пултарайманнипех пуль Асьăран хăтăлма шухăшларĕ. Ара, унăн хăравçăпа ларас килмест-çке. Ăна тепĕр парта хушшине куçарсан пит аван пулĕччĕ уншăн.

Пĕррехинче Андрюша юриех шкула кĕленче савăтпа пысăк эрешмен илсе килчĕ. Ася тискерскере курсан шурсах кайрĕ. Тӳрех аякри парта патне вирхĕнчĕ.

Икĕ кун пĕччен ларчĕ хĕр ача. Виççĕмĕш кунне Анна Сергеевна Андрюшăна уроксем хыççăн юлма хушрĕ. Сăлтавне паллах вăл тӳрех пĕлчĕ, çавăнпа хăйне айăплă туйрĕ.

– Анна Сергеевна, эпĕ эрешмене юриех шкула йăтса килтĕм. Ăна курсан Ася кăштах хăюлланĕ терĕм. Анчах вăл каллех хăраса ӳкрĕ, – терĕ Андрюша пуçне пĕксе.

– Юрать. Ĕненетĕп тейĕпĕр, – терĕ вĕрентекен. – Кам мĕнле пĕлет ыттисене çапла аталанма пулăшать-çке. Халĕ манăн сăмаха тимлĕн итле-ха.

Вăл сĕтел хушшине вырнаçрĕ.

– Темиçе çул каялла сан вырăнта хĕр ачапа арçын ача ларатчĕç. Арçын ачи Вова, хĕр ачи Аня ятлăччĕ. Аня тăтăшах чирленĕрен Вовăн ăна вĕренӳре пулăшма тиветчĕ. Пĕррехинче хĕр ачи урине амантрĕ. Çавна пула шкула та çӳреймерĕ. Вова аптăраса тăман – Аньăна вĕренме çунашкапа сĕтĕрсе çӳреме шут тытнă. Хĕр пĕрчие пĕлтернĕ. Лешĕ савăнсах кайнă. Анчах тӳрех хирĕçлеме пăхнă: «Ку питех те кулăшла курăнĕ. Пиртен шкулĕ-пех пӳрне тĕллесе кулĕç», – тенĕ. «Кулччăрах!» – хуравланă çирĕппĕн Вова. Вара кашни кун ăна шкула çунашкапа илсе пынă. Малтан паллах ачасем кулкалатчĕç, кайран вара хăйсем те инкеке лекнĕскере пулăшма тытăнчĕç. Часах Аня сывалчĕ, вĕренӳ çулне пуринпе те тан вĕçлерĕ, – Анна Сергеевна шăпланчĕ. – Аньăпа Вова çитĕнсен кам пулнине калас-и вара?

– Кам? – ыйтрĕ Андрюша чăтăмсăррăн.

– Вова – сумлă çын, летчик. Вăл санăн асçу – Владимир Петрович Рудаков. Аня вара вĕрентекенӳ – Анна Сергеевна.

Андрюша шухăша путрĕ. Вăл мĕн пĕчĕкрен ашшĕ пек хăюллă та патвар пуласшăнччĕ-çке-ха. Апла хăйне çирĕпрех тытмалла. Ашшĕ ав, ача чухнех маттурлăхĕпе палăрнă. Вăл вара...

Тепĕр ирхине арçын ача Асьăн килĕ умне утрĕ. Хĕр ача, пур япаларан та хăраканскер, шкула асламăшĕпе çӳренине пĕрре мар курнă-ха вăл. Паян та акă пĕрлех тухрĕç пӳртрен.

Андрюша ватă çынна сывлăх сунчĕ. Вара Асьăна:

– Атя шкула пĕрле утар, – терĕ.

Хĕр ача ун çине чăр! пăхрĕ. Ĕненес килмерĕ унăн арçын ачана. Тем те кĕтме пулать-çке харсăрскертен.

– Каях, мăнукăм. Вăл хурсене те, йытăсене те хăваласа ярĕ. Пуçтах арçын ачасенчен те хӳтĕлĕ. Ан шиклен, – терĕ асламăшĕ кăмăллăн. – Йăлтах йĕркеллĕ пулĕ, – терĕ Андрюша çирĕппĕн.

Вĕсем пĕрле утрĕç. Çул çинче тĕл пулнă чашкăракан хур аçинчен те иртрĕç, палламан йытăсенчен пăрăнчĕç. Марук аппан пысăк майракаллă качакине те асăрхамарĕç. Ася хăйне лăпкăн туйрĕ, шикленмерĕ. Андрюша сăмахне тытрĕ, ăна кӳрентерме памарĕ. Апла вăл – шанчăклă çын. Хĕр ача тинех çăмăллăн сывласа илчĕ.

*Вырăсларан Нина ЦАРЫГИНА куçарнă.*

# Тĕнчен тăвата кĕтессине пĕрлештерекен



Авăн уйăхĕн 9-мĕшĕнче тĕнчипе паллă синолог – Чăваш Енĕн чысĕ те мухтавĕ Никита Бичурин çуралнăранпа 237 çул çитрĕ. Кÿкеç поселокĕнчи «Н.Я. Бичурин тата хальхи самана» музей çак паллă куна асăнса «Бичурин вулавĕсем» ирттерчĕ. Вулав паллă ăсчахсене те, студентсене те, шкул ачисене те пĕрлештерет. Унта куçăмсăр майпа та хутшăнма пулать. Вулава тăратнă ĕçсене кайран уйрăм кăларăмпа пичетлеççĕ. Иакинф аттен чыславне Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ, Патшалăх Канашĕн бюджет, финанс тата налук тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет председателĕ Анатолий Пантелеймонович Князев, Шупашкар районĕн администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Зоя Леонидовна Маслова, ытти тÿре-ертÿçĕ, Шупашкарти аслă шкулсен преподавателĕсем хутшăнчĕç.



«Н.Я. Бичурин тата хальхи самана» музей – Шупашкар районĕн ахах-мерченĕ. Пĕтĕм Раççейри ăмăрту-тупăшура та палăрнă вăл. Чăваш халăх культурине кăтартас, палăртас, аталантарас пархатарлă та яваплă ĕçре унăн авторитечĕ питĕ пысăк. Ÿнер ал ĕçĕсен «Паха тĕрĕ» фирмипе пĕрле Атăлçи тăрăхĕн пултарулăх конкурсĕсене йĕркелесе ирттерни мĕне тăрать! Хăш чух шухăшлатăн та – Бичурин музейĕ çинчен Чăваш Енре мар, Китай халăх Республикинче ытларах пĕлеççĕ пек туйăнать!

Музей йĕркелекен мероприятисене тĕрлĕ ÿсĕмри шкул ачисем яланах йышлăн хутшăнни музей стратегийĕн мелне сăнарлать. Тĕнчипе паллă пирĕн ентешĕн пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ ачасен чунĕнче мĕн пĕчĕкрен асра юлтăр, пурнăçри тĕллевсем патне пыма çамрăк ăру Никита Бичуринран тĕслĕх илтĕр. Китайри, Тĕп Ази тата Вăтам Ази тăрăхĕнчи халăхсен историйĕпе, культурипе, географийĕпе, чĕлхипе, пурнăçĕпе çыхăннă 60 ытла ĕç пичетлесе кăларнă пирĕн ентешĕмĕр, çавăн чухлĕ тĕпчев-куçару пичете хатĕрлесе хăварнă!

Юнпа Иакинф атте – чăваш. Сăмахпа сăнарланисем, унăн портречĕсем çакна çирĕплетеççĕ. Ватлăх çитнĕçем Иакинф атте «китайлансах» пынине те палăртнă унăн пĕлĕшĕсем. Чăваш историкĕсем те аванах кăсăкланнă çак ыйтупа. Иакинф атте хăйĕн ачалăхĕ-яшлăхĕ, ашшĕ-амăшĕ, тăванĕсем, пĕлĕшĕсем, тусĕсем пирки аса илме, калаçа пама пит юратман. Тĕн миссийĕпе Китая кайиччен документсенче Никита Пичуринские «из каких наций» графара «великороссийской» тесе палăртнă. Никита Яковлевичăн амăшĕ вырăс, ашшĕ вара чăваш пулни паллă. Анчах чăвашран тухнă тĕн çыннисем вăл вăхăтра хăйсене нихăçан та чăваш – инородец – тесе кăтартман.

Тĕнче наукинче ят илнĕ Иакинф атте чăваш пулнине Петербургра нумайăшĕ пĕлнĕ. 1847 çулта ятне кăтартман автор «Натураллă шкул» ятлă водевиле уйрăм кĕнекепе пичетленĕ (авторĕ П.А.Картыгин текен çын пулнă). Çак йĕплеври Агафон Терентьевич Чувашин текенскер чăнласах çутта тухасси Анăçран мар, Тухăçран пуçланать, унтан кун çути килет тесе ĕнентерет. «Чистой славянской породы» Агафон Терентьевич чăннипе Никита Бичурина сăнарлани çинчен вăл вăхăтрах ăнлантарма кирлĕ пулман. Синологăн еткерне тĕпченĕ Л.Н.Гумилевпа М.Ф.Хван паллă ăсчахсем те Никита Яковлевич çырăвĕсене тишкернĕ чух лешĕ чăваш чĕлхине аван пĕлнине палăртнă.



Тĕнчипе паллă синолог çуралнă кунне халалланă «Бичурин вулавĕсем» Иакинф атте палăкĕ умне чечек кăшăлĕсем хунипе уçăлчĕç. Музейпа парк комплексĕнчи çĕнĕлĕхсем вара çак хумханулла саманта Китай анлăшнех илсе кайрĕç темелле. Чул сарнă сукмаксен тĕрри саралнă, синолог палăкĕпе юнашар паркра Китай культурине аса илтерекен çитти (беседка) ÿссе ларнă. Çак курăмлă та илемлĕ ĕçе пурнăçлаканĕ «Чувашагроинвестстрой» акционерсен хупă обществи. Общество директорне Валерий Гурьевич Борисова «Н.Я.Бичурин тата хальхи самана» музей патриочĕ тесех хакламалла. Унăн тетĕшĕ Ю.Г.Борисов тавра пĕлÿçĕ – Никита Яковлевич Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуçĕнче мар, Шупашкар районĕнчи Типнерте çуралнине палăртакансенчен пĕри.

Вулаври кашни хыпар, тĕпчев кăсăклăхĕпе ăс-тăна тыткăнларĕ. Чăнах та, Никита Бичурин тесенех пурнăç вĕреме тытăнать, тĕнчен тăвата кĕтессине пĕрлештерсе тăрать ăсчах манах. Çапах та чи интересле докладсенчен пĕри филологи наукисен докторĕн Николай Иванович Егоровăн «Китай историйĕнчи огур йăхĕсем (Çурçĕрти пилĕк йăхăн вун ултă патшалăхĕн тапхăрĕ)» пулчĕ. «Китай культурине тата Китай этеммин чунне уçса пама мехел çитернĕрен Иакинф атте ăсчах паттăрĕ тенине хăнăхнă эпир. Никита Яковлевич пире чăваш халăхĕн историне уçса панă пирки вара пит шухăшласах та каймастпăр. Унăн тĕпчевĕсене-куçарăвĕсене пула эпир несĕлсен кун-çулне пирĕн эрăченхи саманасенченех пĕлетпĕр. Хамăра Китай историйĕнче сюнну ятпа тăрса юлнă хăватлă халăх тăхăмĕсем тесе тивĕçлипех шутлама пултаратпăр», – çак шухăшсене истори факчĕсемпе çирĕплетрĕ Николай Иванович.

Никита Яковлевич чысланĕ, «Бичурин вулавĕсем» наукăпа практика конферецийĕ синологăн тăван ялне – Типнере кайса унти асăну чулĕ умне чечек хунипе вĕçленчĕ.



**В.СТЕПАНОВ.**

**Автăр сăн ÿкерчĕкĕсем.**

# Хăюллă çыхăнуçă Лида Вашкевич



Гродно хулинчи историпе тавра пĕлӳ музейĕнче Лида Вашкевич сăн ӳкерчĕкĕ пур. Пионер галстукĕ те çавăнтах. Çар заданине кайнă чухне те хĕр ача унран уйрăлман.

Кантăк айĕнче – хура сумка. Партизансем патне çитерме Лида унта хĕçпăшал, взрывчатка тата хутсем чиксе çӳренĕ.

Юнашарах – партизансен Матросов ячĕллĕ отряд комиссарĕ Писарев юлташ Лида Вашкевич ячĕпе çырнă хыпар хучĕ. Унта хăюллă та харсăр хĕр ача вилĕмрен хăрамасăрах партизансене пулăшни çинчен каланă.

Çарта çыхăнуçă пулнă Лида Вашкевич пионера «Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçин партизанне» 1-мĕш степень тата «Фашист Германине çĕнтернĕренпе 20 çул» медальсемпе чысланă.

* * *

...Ар çын хĕр ачана алăран çавăтнă, васкаса утать. Вĕсем Гродно урамĕпе пыраççĕ. Темиçе уйăх каялла çеç ăна Совет урамĕ тетчĕç. Халĕ вара ăна нимĕçле ят панă... Хулана тăшмансем çавăрса илнĕ. Таçта та – автоматлă нимĕç патрулĕсем. «Ан чарччăр çеç... Ирттерсе яччăр...»

– Патруль! Кунталла! Иртсе çӳремелли картиш çакăнта вырнаçнă!

Вĕсем самантрах çурт хапхинчен кĕрсе çухалчĕç, кил хушшипе иртрĕç те асăрханса тепĕр урама тухрĕç. Кунта шăп.

Пӳртрен пӳрт патне куçса, подъездсенче пытанса вĕсем тинех хула хĕррине çитрĕç. Акă сукмак. Вăл тĕм патне илсе каять, ун хыçĕнче вара вăрман курăнать.

– Ку сирĕн çул, Коля пичче!

– Лида, хăрамастăн-и?

– Çук. Эпĕ пĕчĕк мар вĕт. Курăр...

Лида хĕвĕнчен пионер галстукне кăларчĕ. Çак ахаль çеç хĕрлĕ виç кĕтеслĕхрен темĕнле çутă, ăшă, вăрçăчченхи туйăм тухса тăрать пек. Партизан çыхăнуçи Николай Рачковский хĕр ачана хул пуççинчен хыттăн ыталарĕ.

– Хăюллă эсĕ, – терĕ вăл. – Аçу пекех. Ну юрĕ, Лидок! Ăсатнăшăн тавах. Часах тĕл пулăпăр.

Килне таврăнсан алăка ашшĕ уçрĕ.

– Ну мĕнле, хĕрĕм?

– Лайăхах. Утса çитрĕмĕр.

## Коммунистсен вăрттăн организацийĕ

Гродно хулине нимĕç çарĕсем йышăннă кунтанпа Лидăн ашшĕ коммунистсен вăрттăн организацийĕн ертӳçисенчен пĕри пулса тăчĕ. Хĕр ача вара ашшĕ хушнине пĕтĕмпех пурнăçларĕ.

Вашкевич хваттерне палламан çынсем çӳреме пуçларĕç. Вĕсем çĕрле килеççĕ те темĕн пирки чылайччен калаçаççĕ. Çав вăхăтра вара Лида подъезд умĕнче сыхласа тăрать. Урамалла пăхкалать: иккĕленӳллĕ шухăш çуратакан çынсем çук-и, полицайсем курăнмаççĕ-и, юнашар урамра патруль сасси илтĕнмест-и... Пĕчĕк хăрушлăха сиссенех ашшĕне пĕлтермелле!

Хушăн-хушăн таçта аякра пăшалтан пени илтĕнет, хуть те мĕнле сасă пулсанах патрульсем шатăрттатарма тытăнаççĕ.

Акă хĕр ача алăкран хуллен шаккарĕ: «Урамра никам та çук. Тухма юрать!»

Часах Лида ашшĕ патне килсе çӳрекенсем вăрттăн организацири çыхăнусем пулнине пĕлчĕ. Вĕсем кирлĕ хыпар тата çĕнĕ задани илме пуçтарăнаççĕ.

Пĕррехинче çавăн пек канашлу хыççăн ашшĕ Лидăна чĕнсе илчĕ те:

– Хĕрĕм! Акă укçа. Лавккаран шурă хут туянмалла. Каçхине ăна Коля пичче илсе кайĕ. Асăрхан. Сана тĕл пулакансен шанманлăх туйăмĕ ан çуралтăр, – терĕ.

Ирхине, лавккасем уçăлсанах, Лида ашшĕ хушнине пурнăçлама кайрĕ. Малтан пĕр, унтан тепĕр лавккана кĕрсе каç енне чылай хут туянчĕ. Николай Рачковский килчĕ те çак «пурлăха» илсе кайрĕ.

Темиçе кунтан хулара Совет информбюровĕн хыпарĕсене çутатакан листовкăсем курăнма пуçларĕç. Каллех хут кирлĕ. Ытларах та ытларах. Лида тепĕр хутчен лавккасене çӳреме тытăнчĕ. Пĕринче сутуçă ун çине шанмасăртарах пăхнăн туйăнчĕ. «Нивушлĕ темĕн тĕшмĕртет?» – шухăшласа илчĕ хĕр ача. Анчах хумханнине кăтартмасăр, нимĕн пулман пекех тухрĕ лавккаран. Урăх ниçта та каймарĕ, килне таврăнчĕ. Каçхине çакăн çинчен ашшĕне пĕлтерчĕ, лешĕ шухăша путрĕ.

– Атте, эпĕ ачасемпе, шкулти тусăмсемпе калаçса пăхсан мĕнле? Нумайăшĕ хуларан кайса ĕлкĕреймен вĕт-ха. Вĕсем хут туянма пулăшĕç, никам та нимĕн те тавçăраймĕ...

Тепĕр кунне Лида хулара юлнă ачасем патне çитсе кашниех темиçешер хут туянма ыйтрĕ. Мĕн пуçтарнине шутласа пăхсан Лида калама çук савăнчĕ – вăл пĕчченкун чухлĕ туянаяс çукчĕ. Коля пичче пур ачана та мухтарĕ, малашне асăрханулăрах пулма хушрĕ. Ачасенчен хăшĕ-пĕри çак хутсем мĕнле ĕç валли пулнине тавçăрчĕ, вăрттăн организацире ĕçлекенсемшĕн усăллă ĕç тума пултарнишĕн хĕпĕртерĕ.

Хулара ытларах та ытларах листовка курăнма тытăнчĕ. Вăрттăн организацире ĕçлекенсем совет çыннисене фашистсене пăхăнмалла мар, вĕсен пропагандине итлемелле мар теççĕ. Çавăн пекех унта Совет çарĕсем Мускав тата Сталинград çывăхĕнче еплерех çитĕнӳ туни çинчен каланă. Çынсем çакна вăрттăн вуласа ыррине шанма пуçларĕç: нимĕç оккупанчĕсене часах тĕп тăвĕç, Гродно хулине ирĕке кăларĕç. Полицайсем вара пӳрт хыççăн пӳрт патне чупса çав листовкăсене тăпăлтараççĕ кăна, çынсем вуласа ĕлкĕресрен хăраççĕ. Вăрттăн вырнаçнă типографие шыраса та халтан кайрĕç вĕсем. Çуртсене вирхĕнсе кĕрсе хваттерсене ухтараççĕ, айăпсăр çынсене арестлеççĕ. Облавăсем пуçланчĕç. Урама тухма та хăрушă. Çак капкăна вăрттăн организацире тăракансем те лекме пултараççĕ-çке. Пурне те асăрхаттармалла!

Лида нимĕç аллине çакланасран хăрамасăрах çак ĕçе пуçăнчĕ: малтан тĕл пулмалли хваттерсене, ун хыççăн хула хĕрринче тĕл пулма палăртнă вырăнсене çитсе хыпарласа хăварчĕ.

Гитлер влаçĕнчисем ниепле те ăнланма пултараймаççĕ: вăрттăн организацирисем ăçтан хут тупаççĕха? Хула комендантĕ мĕн пур хута пĕр магазина çеç хăварма ирĕк парать. Çапла майпа нимĕçсем «айăпллине» тытасса шанаççĕ. Анчах ачасем кунта та чеелĕх кăтартаççĕ. Йăлтах Лида шухăшласа кăларать. Лавкка уçăличчен ачасем çывăхри картише пуçтарăнаççĕ те тĕрлĕрен вăйă выляççĕ. Пĕр картишрен теприне чупаççĕ вĕсем, мечĕк хăвалаççĕ, «çăлакан патакла» выляççĕ...

Акă лавкка уçăлчĕ те ачасем пĕри те тепри унта тĕпĕртеттерсе васкарĕç, кам кăранташ туянать, кам хуратмалли, пĕрлех хут илме те манмарĕç. Çапла вĕсем кашни кунах малтан пĕрин патне, унтан теприн патне пуçтарăнаççĕ, мĕн чухлĕ хут пухнине шутлаççĕ, Лида вĕсене кирлĕ çĕре çитерет.

## «Сирĕн сĕлĕ пур-и?»

Поезд питĕ вăрах шăвать. Кашни чарăнурах вагона эсэсовецсем кĕреççĕ те документсене тĕрĕслеççĕ.

– Скидель! – чарăну ятне каларĕ проводник. Лида вагонтан сиксе юлать.

Акă вăл хулара. Пĕр кинемирен пасара мĕнле çитмеллине ыйтрĕ те унталла васкаса утрĕ. Пасарта çын нумай. Анчах кунта та полицайсем темĕн шăршласа çӳреççĕ. Акă пĕр вĕçĕнче хĕр ача кĕрĕк тăхăннă, пилĕкне вĕрен çыхнă палламан ар çынна курчĕ. Вăл урапа çывăхĕнче чĕлĕм туртса тăрать. Ун патне тӳрех пыма хĕр ача хăюлăх çитереймерĕ, урапине аякран сăнарĕ. Чăнах та, çавах: пĕкĕ çинче шăнкăрав пур, çывăхрах ахаль хутран ăсталанă чечек выртать. Лида урапа тавра çаврăнса палламан çын патне çитрĕ.

– Сирĕн сĕлĕ пур-и? – шăппăн ыйтрĕ вăл.

Кĕрĕклĕ çын палламан хĕр ача çине тĕлĕнсе пăхрĕ, васкамасăр хуравларĕ:

– Çук, тулă кăна сутатăп.

Лида тиев патне пычĕ, тулă кĕрпине пӳрни витĕр сăрхăтарнă май пăшăлтатрĕ:

– Коля пичче çăнăхпа тăварне хăвăртрах илсе килме ыйтрĕ. Вĕсен халĕ çимелли енчен питĕ йывăр.

– Ытлари кун калаçса татăлнă тĕлте кĕтчĕр, – вăрвар хуравларĕ палламан çын. – Маларах май килмерĕ: фашистсем хуралне вăйлатнă.

– Юрĕ, çапла калăп.

Лида хăйĕн ĕçне пурнăçларĕ те Гродно хулине тулли кăмăлпа таврăнчĕ.



Неман шывĕн тепĕр енне çитме çăмăлах мар. Кĕпере нимĕçсемпе полицайсем сыхласах тăраççĕ. Унта вара епле пулсан та лекмеллех. Шăпах паян палăртса хунă вырăна взрывчатка кайса хумалла. Кайран ăна вăрттăн организацири партизансем илĕç те трансформатора сирпĕтĕç, çапла майпа фашистсем çавăрса илнĕ хулана электричествосăр хăварĕç.

...Лида Неман хĕррипе васкамасăр пырать. Çурăмĕ хыçĕнче – кăмрăк тултарнă пысăк хура сумка, тĕпĕнче – взрывчатка. Акă кĕпер. Ăна икĕ енчен те хуралласçĕ. Лида çывăхарах пырсан полицай ăна асăрхамарĕ пек. Тен, çаплах иртсе тарма пулать? Анчах часах ăна кăшкăрчĕç:

– Ăçта васкатăн, хĕр ача?

– Киле. Ав çавăнта пирĕн çурт, чăнкă çыранта.

– Сумкăра вара мĕн?

– Хулара кăмрăк пуçтартăм. Вутă çук, кăмрăкпа та пулин кăмака хутас. Акă, пăхăр. – Хĕр ача сумкине хăюллăнах уçса кăтартрĕ. Чĕри çав вăхăтра тухса тарма та хатĕрччĕ.

– Атя, иртсе кай! – терĕ полицай уçă сумкăна курсан.

Лида палăртнă вырăна хăвăртах тупрĕ: сад хыçĕнчи тăваттăмĕш телеграф юпи, ун патĕнче – çĕрсе кайнă çĕр улми купи. Канас тенĕ евĕр ларчĕ те вăл взрывчаткăна купа айне вырнаçтарчĕ. Килне каçхине çеç таврăнчĕ.

Сĕм çĕрле вара хăватлă взрыв таврана янăратрĕ, хулара çутă сӳнчĕ...

**http://netvoyne.ru/**сайтран.

# ЭП – ГАГАРИН, ЭС – ТИТОВ...

Паян унчченхи пек автан сассипе ир-ирех вăранаймарăм. Ĕнер урамра туссемпе нумайччен алхаснăран хытă ывăннă çав эпĕ. Çитменнине каç енне футболла вылярăмăр. Мечĕк хыççăн унталла та кунталла чупса халран кайрăм. Мĕн тăвăн, манран пысăкраххисем çил пек ыткăнаççĕ те эпĕ те вĕсенчен юлас мар тетĕп.

Килте никам та çукки тĕлĕнтерчĕ. Ара, ку вăхăтра асанне те пулин кăмака çумĕнче чăлха çыхса лараканччĕ. Эпĕ вăрансан хăпăл-хапăл сĕтел çине шаркку лартатчĕ.

Аптăранă енне тăхăнтăм та пахчана тухрăм. Акă ăçта манăн юратнă çыннăмсем!

– Мĕн ĕçлетĕр? – терĕм çăвар тулли анасласа.

– Кач-кач, кач кăшман,
Каç та пулать, ир те пулать,
Çулла та пулать,
Кĕр те пулать,
Çапах пире кăлармаççĕ, – тесе каларĕç пире паян пахчари кăшмансем.

Тĕлĕнсе пăхатăп аппа çине. Ара, ўсен-тăран калаçнине нихăçан та илтмен те, куççем чарăлсах кайрĕç. Ним калама аптăраса тăратăп çапла. Унтан ешĕл çулçăллă кăшман умне пĕшкĕнсе пăхрăм. Çăварĕ те, хăлхи те, куçĕсем те çук. Чăнах. Епле калаçнă-ши вара вăл аппапа? Кай, ман валли тупмалли юмах ку.

– Каш-каш Кашша килет,
Умлă-хыçлă инке килет.
Çав хыçалти пахчаран
Пĕр кăшманне... турт кăлар! – терĕ аппа мана йăран çумне çавăтса пырса.

Эккей, мана та пĕрле ĕçлеттерессишĕн çапла юптарнине тин ăнланса илтĕм. Ай, таса аллăма тăпрапа варалассăм, пилĕке те авассăм килмест.

– Ларать, ларать, Лисук ларать
Шĕшкĕ тĕмĕ айĕнче.
Çиет, çиет, Лисук çиет
Шĕшкĕн сарă мăйăрне.
Вăхăт çитсен тăрас пулать,
Кăшман кăларас пулать, – сăвăларĕ асанне те çĕр çинче чакаланаканскер.

Пирĕн килте асанне каланине пурнăçласси – саккун. Ăна пурте итлеççĕ, сĕнў-канашсене пурте ăша хываççĕ. Унăн сăмахĕнчен иртекен те çук. Çавăнпа эпĕ те сăмах чĕнмесĕр хĕрў ĕçе тытăнтăм.



Эп – Гагарин,
Эс – Титов,
Вăл – Валерий Соколов.
Андриян пекех маттур
Кам пуласшăн – тухса кур!



Пăр-пăрчăкан
Пăри пăтти пĕçерет.
Пăтти пиçсе çитсенех
Çак ачана çитерет.



Ачи камăн? –
Алманчăн.
Кипки камăн? –
Кипечсен.
Çитти камăн? –
Çителсен.
Тутри камăн? –
Тутарсен.
Сăпки камăн? –
Супарсен.

Тунти кун ту çинчен ўкрĕм.
Ытлари кун ыратрĕ,
Юн кун юн тухрĕ,
Кĕçнерни кун кĕçĕтрĕ,
Эрне кун эмеллерĕм,
Шăмат кун шăтрĕ,
Вырсарни кун вăййа тухрăм.



*Элиза ВАЛАНС (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# «Раççей — спорт çĕр-шывĕ» форум çывхарать

**Шупашкарта пĕтĕм тĕнчери спорт форумне ирттерес кунччен вăхăт нумай та юлмарĕ – уйăхран та сахалрах. Çавна май йĕркелӳ комитетĕнче ăна еплерех ирттерес ыйтăва тăтăшах сӳтсе яваççĕ.**
**Чăваш Ен Пуçлăхĕн пресс-службинчен пĕлтернинчен çакă паллă: программăна Пĕтĕм тĕнчери спорт уттипе уçĕç, Раççейре ăна пĕрремĕш хут ирттерĕç. Çав кун Шупашкарти Атăл кукринче вунă пине яхăн çын утса çаврăнĕ. Ку сывлăха çирĕплетекен утă пуласси пĕлтерет Спорт министерствин ертӳçи Сергей Мельников. Вăл Наци кросĕ евĕртерех иртĕ. Тĕллевĕ – халăхăн хускану хастарлăхне ӳстересси.**
**Ун хыççăн вара, программăпа килĕшӳллĕн, спорт парачĕ пулмалла. Унта Раççей тата тĕнче чемпионĕсем хутшăнĕç. Ку питĕ интереслĕ пулĕ. Тĕслĕхрен, футбол федерацийĕ метр çурă пысăкăш мечĕкпе тухĕ. Баскетбол федерацийĕ мечĕкпе мĕнле хуçаланмаллине кăтартса парĕ. Илемлĕ гимнастика ушкăнĕ вара булавăпа, хăюпа, обручпа тата сиккĕчпе усă курма вĕрентĕ.**
**Çавăн пекех çăмăл атлетикăпа, триатлонпа, сĕтелçи теннispа, адаптаци спорчĕпе, кĕрешӳпе, самбопа, гимнастикăпа, пăр çинче илемлĕ ярăнассипе ăсталăх класĕсем иртĕç. Ку ĕçе республикăри 150 спортсмена явăçтарĕç, пурĕ 400 специалист хутшăнĕ.**

Шупашкар 2014

## Ачасем те хатĕрленеççĕ



Шупашкарти Олег Беспалов ячĕллĕ 7-мĕш шкул çывхарса килекен спорт форумне тăрăшсах хатĕрленет. Кĕçĕн классем те айккинче юласшăн мар. Нумаях пулмасть тăваттăмĕш класс ачисем мини-футболла выляса ăмăртрĕç. Командăсемшĕн сасăлакансем хăйсем те кам вăйлăрах кăшкăрассипе тупăшрĕç тейĕн, кашниех выляканĕсене хавхалантарма тăрăшрĕ. Кунта кам çĕнтерни те пĕлтерĕшлех мар. Чи кирли, ачасем спорта юратни, сывă пурнăçа хаклани.

*Яна ЗАЙЧЕНКО.*

## Шупашкарта хăвăрт утас енĕпе Раççей Кубокĕшĕн ăмăртрĕç

Авăнăн улттăмĕшĕнче Чăваш Ен тĕп хулинче хăвăрт утса ăмăртма çĕр-шывăн вун виçĕ регионĕнчен 137 спортсмен пуçтарăнчĕ. Вĕсенчен улттăшĕ – Раççейĕн тава тивĕçлĕ, вун виççĕшĕ – тĕнче класлă спорт мастерĕсем.

Чи малтанах ар çынсемпе 23 çула çитмен яшсем 35 çухрăм утса тухрĕç. Ун хыççăн хĕрсем 5 тата 10 çухрăма парăнтарчĕç.

Мордва Спорт центрĕн вĕренекенĕ Роман Евстеев тата çак республикăранах килнĕ Маргарита Колесниченко «ылтăн» çĕнсе илчĕç. Çамрăк спортсменсенчен вара чăваш хĕрĕ Клавдия Афанасьева чи маттурри пулчĕ.

Ăмăртăвăн иккĕмĕш пайĕнче 20 çухрăма Марина Пандакова чи малтан парăнтарчĕ, Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ командине тепĕр «ылтăнпа» пуянлатрĕ. Алена Храмова иккĕмĕш çитрĕ. Каччăсенчен 10 çухрăма чи малтан утса тухаканĕ – Мордваран килнĕ Владимир Саксин.

Каччăсенчен çирĕм çухрăма чи малтан чăваш спортсменĕ Петр Трофимов утса тухрĕ. Иккĕмĕш вырăнта – Удмуртири Сергей Шарынов.

Пĕтĕмĕшле зачетра вара Мордва Республики çĕнтерчĕ. Чăваш Енĕн пĕрлештернĕ команди иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Мордван тепĕр команди вара – виççĕмĕш.

## Сывлăх çăл куçĕ

Паянхи кун чупу – чĕре ĕçне лайăхлатакан чи ăнăçлă мелсенчен пĕри. Вăл юн пусăмне те йĕркелет. Ку ĕçре çанталăк хăратаймасть: хуть те хăçан тата кирек ăçта чупма юрать. Ытлашши хыпаланмалла мар çеç, вара чупни этемшĕн эмел пекех пулĕ.

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç шкулĕнче вуннăмĕш класра вĕренекен Аня Лубашкина спортăн çак тĕсĕпе туслашнăранпа хăйне сывлăх енчен питĕ аван туять. Малтан вăхăт ирттермелле, вырăнта ларас килменнипе çеç чупма кăмăллана пулсан, халĕ вăл шкулти, районти тата республикăри ăмăртусене те хаваспах хутшăнать.



Кĕçĕн класранпах спортпа кăсăкланать Аня. Пуçламăш çитĕнĕвĕ ăна çиччĕмĕш класра савăнтарнă. Районта пин метр чупса финиша вăл иккĕмĕш çитнĕ. Çавăн чухне тивĕçнĕ медальпе Хисеп хучĕшĕн мĕн тери савăннă-çке! Пурнăçра кашни пулăм пĕр-пĕрне витĕм кӳрет темелле пуль. Паян эпир ĕнерхинчен ăслăрах, ыран вара паянхинчен ăстарах пулма ĕмĕтленетпĕр. Çак маттур хĕр ачан та çавăн пекех. Спортра ăнăçу хыççăн ăнăçу тăвасси шăпах пĕррехинче ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăннăранпа пуçланса кайнă та. Малашне тата пысăкраххи патне ăнтăлатăн-çке, пĕрремĕш картлашкана куç хыватăн. Часах Аня Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вĕçленнĕренпе 67 çул çитнине халалланă кросра пĕр çухрăм чупса районта пĕрремĕш вырăна тухнă. Пĕтĕм тĕнчери чупмалли кун пин метра парăнтарса каллех мала тухнă. Çавăн пеку çитĕнӳсем питĕ нумай.

Аня спортăн ытти тĕсĕпе те туслă. Хĕр ачасен командинче баскетболла выляса сахал мар çитĕнӳ тунă. Хисеп хучĕпе медальне шутлама тытăнсан арпашăнсах кайăн.

– Паллă спортсменсем хушшинче мана шăчăпа сикекен, икĕ хутчен Олимп чемпионĕ ята тивĕçнĕ Елена Исинбаева килĕшет. Вăл яланах çĕнтерӳ патне ăнтăлать. Аманнине пула пĕрре спортран кайрĕ пулин те кайран пур пĕрех таврăнчĕ, – тет çирĕплĕхе кăмăллакан хĕр ача.

Кăçал çĕртме уйăхĕн 28-мĕшĕнче вăл Çамрăксен кунне халалланă ăмăртăва хутшăннă. Çав кун çумăрĕ чăрмантарас тенĕ-ши? Е çамрăк спортсменсен чăтăмлăхне тĕрĕслесшĕн пулнă-ши? Чупнă чухне Аня йывăрлăха пĕрех парăнман, хăвăртлăха ним чухлĕ те чакарман, финиша иккĕмĕш çитнĕ.

Нумай хускану тăваканăн хастарлăхĕ ӳсет, вăл пур çĕре те ĕлкĕрет. Пуç мими те лайăхрах ĕçлеме тытăнать. Çакна ахальтен каламастăп. Аня шкулта «4» тата «5» паллăсемпе çеç вĕренет, малашне те малта ĕлкĕрсе пыракансен йышĕнчех пулма ĕмĕтленет. Эппин, чупни ăна ырă витĕм çеç кӳрет.

Ял çыннин укçа-тенкĕ нихăçан та ытлашши пулмĕ. Ăна çитеркелесе пыма ахаль те йывăртарах. Хĕр ача ашшĕ-амăшне питĕ аван ăнланать. Çавăнпа вăл шкулта тăрăшса вĕренсе, лайăх пĕлӳ илсе аслă шкула тӳлевсĕр вĕренме кĕресшĕн.

– Малашне те çитĕнӳ тăвасса шанатăп. Спорт – сывлăх çăл куçĕ. Пур ачана та çакăн çинчен физкультурăра çеç мар, уроксем хыççăн та ас тума сĕнетĕп, – тет Аня Лубашкина каллех чупма хатĕрленнĕ май.

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

•ПĔР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАÇÇĔ

# Лайăх юлташ

Манăн юлташа Ксюша тесе чĕнеççĕ. Вăл кашни конкурса хастар хутшăнать. Малти вырăнсене йышăнать. «Тантăш» хаçатпа та Ксюша питĕ туслă – унта ӳкерет, çырать. Лауреат та пулнă. Раççейри чи паллă ача-пăча лагерьне «Орленока» кайса курчĕ. Спортпа та вăл питĕ туслă, вĕренӳре те аван ĕлкĕрсе пырать. Манăн ун пек тус пурришĕн питĕ хĕпĕртетĕп. Ахальтен каламаççĕ вĕт ваттисем: «Юлташу хăвăнтан лайăхрах пултăр», – тесе. Тусăм маттур пулнишĕн савăнатăп, хам та унран тĕслĕх илетĕп.

*Дина ИЛЬИНА.*



*© Катя КОШЕЛЕВА ӳкерчĕкĕ.*

# Ула такка

Пĕррехинче эпир аппапа вăрмана кайрăмăр. Ватă юман çинче ула такка ларнине асăрхарăмăр. Вăл шĕвĕр сăмсипе хăрăк турата çине-çинех таккатчĕ. Унăн чĕпписем те пурччĕ. Ĕçчен кайăк тăрмашнине эпир киленсе пăхса тăтăмăр. Юлташсене те ун пирки каласа паттăмăр.

# Шăкăлчи

Шăкăлчи – хитре кайăк. Унăн пуç тăррийĕ, çуначĕсем тата хӳри хура тĕслĕ. Пичĕпе хырăмĕ айĕнче, çуначĕсемпе хӳринче шурă пăнчăсем. Сăмси тавра сарлака, хĕрлĕ йăрăм. Çурăмĕпе пĕсехи çинче пăнчисем хăмăр тĕслĕ. Вăл ӳсен-тăран вăррисене çисе пурăнать.

Шăкăлчи хăйĕн типтерлĕ йăвине çинçе курăк тунисемпе пĕчĕк тымарсенчен çавăрать. Эрешмен картипе çыпăçтарать. Йăви ăшне ӳсен-тăран мамăкĕпе çăм тата тĕк сарать. Тул енчен мăкпа тата хурăн хуппипе витет.

*Оля АНАНЬЕВА.*



*© Ксюша КОШЕЛЕВА ӳкерчĕкĕ .*

ПУЛМАСЛА ХАЛАП

# Çырлара



*© Катя КОШЕЛЕВА ӳкерчĕкĕ.*

Пĕррехинче хĕлле çырлана кайрăмăр. Çырли нумай, анчах юр хытă çума пуçланипе ăна пуçтараймарăмăр. Карçинккасем юрпа тулчĕç. Хамăр та шăнса ĕнтĕркерĕмĕр, ара, майкăсем кăна тăхăннă-çке-ха!

Çулла вара çĕлĕк, кăçатă, алсиш тăхăнса вăрмана каясшăн.

Темĕн те пулать иккен çанталăкпа.

# Паянхи ĕçе ырана ан хăвар

«Паян тумалли ĕçе ырана ан хăвар», – тенĕ ĕлĕк-авал ваттисем. Ку тĕрĕсех пулнине манăн пурнăçри пĕр пулăм та çирĕплетет.

Пĕррехинче урама тухсан ачасем хĕрсе футбол выляняне куртăм. Хам та унталла чупрăм. Нумай та вăхăт иртмерĕ, анне уроксене хатĕрлеме чĕнчĕ. «Кăшт вылям-ха ĕнтĕ тата», – йăлăнтăм эпĕ. Питех те мечĕк хăвалас килетчĕ-çке!

Киле кĕрсен ыйхă пуснипе тӳрех кравать çине йăвантăм. «Юрĕ, ĕлкĕрĕп-ха», – шухăшларăм çывăрса каяс умĕн. Ирхине çиччĕ иртсен сиксе тăтăм та уроксене хатĕрлеме сĕтел хушшине лартăм. Васкаса çырса пĕтертĕм те шкулалла утрăм. Пĕрремĕш урокра учитель килти ĕçсене тĕрĕслерĕ. Манăн тĕрĕс мар иккен. Киле пуçа усса таврăнтăм. Хамăн хуйхăна асаннепе пайларăм. Вăл вара çак ваттисен сăмахне аса илчĕ. «Малашне ĕçе ырана хăвармăп», – терĕм çирĕппĕн.



*© Катя АЛЕКСАНДРОВА ӳкерчĕкĕ .*

*Наташа НИКОЛАЕВА.*

# Мĕн-ши вăл сăпайлăх?

Сăпайлăх вăл – çынпа кăмăллăн калаçни, урокра лайăх ларни, пур çĕрте те хăвна йĕркеллĕ тытни. 1653 çултах Я. А. Каменский çамрăксен хăйсене мĕнле тытмалли çинчен калакан правилăсем хатĕрленĕ. Вĕсем халĕ те сыхланса юлнă.

Унта çынпа калаçнă чухне яланах хăвна тирпейлĕ тытмаллине, кăмăллă пулмаллине пĕлтернĕ. Çамрăксен ваттисене пулăшмалла. Пĕр-пĕринпе тĕл пулсан çĕлĕке е карттуса хывмалла.

Чăваш Енре сăпайлă та кăмăллă çынсем нумай тесе шухăшлатăп. Эпĕ те вĕсен йышĕнче пулма тăрăшатăп.

*Таня ИВАНОВА.*

# Пулла кайни

Ку ĕç çулла пулса иртрĕ. Ун чухне эпĕ пĕчĕкчĕ-ха.

Марийăпа çынсем епле пулă тытнине пĕрре мар курнă. Вĕсем патакран çип çыхнă, вĕçĕнче тимĕр çакăнса тăрать. Çавсене шыва яраççĕ те пулă тытаççĕ.

Пирĕн те çапла хăтланса пăхас килчĕ. Асаннен туйине илтĕмĕр те çип çыхрăмăр, ун вĕçне – тимĕр татăкĕ. Кӳлĕ хĕрне çитрĕмĕр те вăлтасене шыва ятăмăр. Анчах пĕр пулă та лекмерĕ. Каçченех лартăмăр. Вара нимсĕрех килелле утрăмăр.



*© Ксюша КОШЕЛЕВА ӳкерчĕкĕ .*

# Кĕтӳ кĕтни

Пĕррехинче аттепе кĕтĕве кайрăм. Çанталăк кĕр енне сулăнннăччĕ. Кĕркунне ĕнесем усалланаççĕ, май пулсанах килĕсене тараççĕ. Кăнтăрла тĕлне аттен яла таврăнмалла пулчĕ. «Ĕнесем тутă, халĕ пĕр-икĕ сехет лăпкăн выртĕç. Эпĕ кĕçех каялла çаврăнса çитĕп», – терĕ вăл.

Юрать пĕрле мăнтăркка йытă çурине илнĕччĕ. Кичем пулмарĕ. Иксĕмĕр чун каниччен вылярăмăр, çерем çинче йăвалантăмăр. Чылай вăхăт иртнĕ пек туйăнчĕ. Атте вара халь те çук.

Ĕнесем тăнă, курăк чĕпĕтеççĕ. Çӳресен-çӳресен кĕтĕве ял енне пăртăм. Выльăхсем хуçа çуккине сисрĕç пуль, хăш самантра яла кĕрсе кайрĕç.

Эпĕ каçхи пилĕк сехетрех кĕтĕве кĕртнĕ иккен. Тĕлĕнмелле те, анчах килтисем мана куншăн ятламарĕç.

*Дима ТУМАЛАНОВ.*

# Машина уççи ăçта?

Пирĕн атте, колхозра шоферта ĕçлекенскер, час-часах çула тухатчĕ. Кичем ан пултăр тесе пире те хăш-чухне пĕрле лартса çӳретчĕ. Пĕррехинче аттен машинăпа тырă леçме каймаллаччĕ. Шăллăм та ăшталанса хатĕрленчĕ. Анчах çулĕ инçе пулнипе атте ăна пĕрле илес темерĕ. Лешĕ каланине йăланасшăн мар, куляннипе йĕрсе те ячĕ. Унтан урама вирхĕнсе тухрĕ.

Атте кайма хатĕрленчĕ. Анчах самантран каллех пӳрте кĕчĕ – машина уççийĕ çук иккен. Çухалнă. Атте пур кĕсйине те силлесе пăхрĕ, анчах кăлăхах. Юрать пĕрле уççи пурччĕ...

Вăл кайнă хыççăн аннепе тепĕр хут пĕтĕм кĕтесе ухтартăмăр. Тупаймарăмăр. Шăллăм та каялла таврăнчĕ. «Атте мĕнле кайнă? Машини çук-çке!» – терĕ кĕнĕ-кĕмен.

«Ара, унăн мĕншĕн каймалла марччĕ-ха? – ыйтрĕ анне чеен. – Мĕн хăтлантăн? Йăлтах каласа пар», – терĕ.

Атте хăйне пĕрле илменшĕн питĕ кӳреннĕ иккен шăллăм. Вара машина уççине илнĕ те çывăхри юхан-шыва кайса пенĕ. Вăл урăх ниçта та ан кайтăр тесе шухăшланă.

*Наташа ФЕДОРОВА.*

Йĕпреç районĕ,
Çăкалăх шкулĕ.

# Пирĕн çемье

Эпир пиллĕкĕн пурăнатпăр: атте, анне, асанне, шăллăм тата эпĕ.

Атте Коля ятлă. Вăл колхозра ĕçлет. Аннене Надя тесе чĕнеççĕ. Медпунктра вăй хурать. Вĕсем пирĕншĕн питĕ тăрăшаççĕ. Ачисем лайăх çынсем пулса ӳсчĕр теççĕ.

Асанне тивĕçлĕ канура. Килте кăштăртатать, вак-тĕвек ĕçсемпе аппаланать.

Шăллăмпа иксĕмĕр Çăкалăхри вăтам шкулта вĕренетпĕр. «5» тата «4» паллăсем çеç илетпĕр.

Эпĕ хамăн туслă çемьене юрататăп. Атте-анне ятне тытса пыма тăрăшатăп.

*Маша ОРЛОВА.*

# Хавасла 2014 самант

## Анаворд



1. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ паллă этнограф. 2. ... палли (алфавитри сас палли). 3. И. Яковлев хатĕрленĕ вĕренӳ кĕнеки. 4. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пĕрремĕш вĕренекенĕ. 5. Кĕнекесен куравне йĕркелемелли сентре. 6. Шкулти сĕтел-пукан. 7. Ăслăлăхра XX ĕмĕр пуçламăшĕччен çак сăмах «чĕлхе» ăнлавпа çӳренĕ. 8. Чĕлхери сăмахсар пуянлăхĕ. 9. Чăваш чĕлхин тĕпчевçин Тимухха Хĕветĕрĕн чăн хушамачĕ. 10. Шкул ачи.

***Ыйтусене тĕрĕс хуравласан паллă тунă йĕркере шкулти тĕп специалист ячĕ вуланĕ.***

## «Çут çанталăк» сăмах касмăш



1. Килти чĕр чун. 2. Уйра çитĕнекен культура. 3. Çамрăк выльăх. 4. Китайри уланкă. 5. Шывра пурăнакан чĕр чун. 6. Уй-хирте, çаран çинче пурăнакан вĕçен кайăк. 7. Тимлех маррисем ăна кăвакарчăнпа пăтраштараççĕ. 8. Çĕрпӳ тата Куславкка районĕсем витĕр юхса иртекен Атăл юппи. 9. Муркаш районĕнчи Нискасси ялĕ патĕнчен пуçланакан юхан шыв, Атăл юппи. 10. Тинĕсре пурăнакан çăткăн пулă. 11. Пысăк вĕçен кайăк. 12. Çĕмĕрле районĕнчен пуçланакан юхан шыв, Атăл юппи. 13. Юхан шыва кăмăллакан вĕçен кайăк. 14. Килти чĕр чун. 15. Утă çулмалли хатĕр. 16. Çĕр çинчи чи авалхи йывăççенчен пĕри. 17. Çĕпĕрти юхан шыв. 18. Азире, Африкăра ĕрчетекен майракаллă шултра выльăх. 19. Лаша йăхне кĕрекен чĕр чун. 20. Хурт-кăпшанкă. 21. Килти выльăх. 22. Каçхи вĕçен кайăк. 23. Хаклă тирлĕ чĕр чун. 24. Америкăри кушак йăхне кĕрекен чĕр чун.

***Юрий ФРОЛОВ*** (Шупашкар) **хатĕрленĕ.**

## Сăмах вăчăри



1. М. Федоровăн «Арçури» балладинчи сăнар. 2. Ĕлĕкрех усă курнă пичет машини. 3. Тухтăр. 4. Ереван вырăнĕнче пирĕн эрăччен пулнă хула тата крепость. 5. Иçĕм çырли сорчĕ. 6. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче ĕçленĕ поэт, фольклорист. 7. Журналистикăри принципсенчен пĕри. 8. Пуласлăха ал лаппи çинчи йĕрсем тăрăх пĕлекен. 9. Чăваш халăх çыравçи. 10. Евĕрлев сăмахĕ. 11. Çарти пуçлăх. 12. Хĕç-пăшал. 13. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче палăрнă çар пуçĕ. 14. Декабрист, князь, генерал-майор, А. Герцен тата Н. Огарев çыравçăсен тусĕ. 15. Йĕнер пайĕ. 16. Чăваш халăх поэчĕ. 17. Рудникра руда турттармалли хатĕр. 18. Ĕç хатĕрĕ. 19. Чăвашран тухнă чи паллă çынсенчен пĕри. 20. В.И. Краснов-Асли çырнă роман. 21. Чăваш çыравçи. 22. Электрон кĕнеке. 23. Сăрт-ту предприятийĕ. 24. ... хушшине шыв кĕмест. (ват.сăм.) 25. Çĕнĕлĕх.

***Хуравсене тĕрĕс тупсан диагональсенче ял хуçалăх культурин тата Тайăр Тимкки поэтăн французсен чăвашла куçарнă гимнĕн ячĕсем вуланĕç.***

***Юрий ФРОЛОВ*** (Шупашкар) **хатĕрленĕ.**

## Сăмах касмăш



**Сылтăмалла:** 1. Чӳрече пайĕ. 5. Çĕтĕк-çурăка «витекен». 8. Килти мăр-мăр. 9. Фольклор жанрĕн ăсти. 10. Пĕр-пĕр ĕçе çиелтен пăхса аппаланни. 11. Çĕр-шыва чунĕпе парăннă çын. 15. Хими шĕвекĕ. 16. Грузири кĕтес. 17. Вăрмар районĕнчи ял. 19. Ăна «куккук» ашшĕ тӳлесшĕн мар. 24. Кĕвĕ хайлавĕ. 26. Д. Пуччини опери. 27. АПШри штат. 28. Чăваш çыравçи, хĕрарăм. 29. Карапсен пысăк ушкăнĕ. 30. Йăрăскер.

**Аялалла:** 1. Хытă хут. 2. Аэропортри ятарлă вырăн. 3. Качака апачĕ. 4. Инçет хĕвел тухăçĕнчи утрав. 6. Вăл фашистсен тинкине кăларнă. 7. Килти выльăх. 11. Америкăри юхан шыв. 12. В. Краснов-Асли романĕ. 13. Крым çывă- хĕнчи Арал тинĕсĕ. 14. Пӳрт пайĕ. 18. Урамри шăтăк-путăк. 20. Физика пайĕ. 21. Красноармейски районĕнчи ял. 22. А. Артемьев çыравçăн вилĕмсĕр хайлавĕ. 23. Типографири тахçанхи сас палли. 25. Ăста.

***Николай КРАСНОВ.***
Йĕпреç районĕ.

### Хăшĕ ытлашши?

1. Сăвă, кĕнеке, калав, юмах.
2. Пӳрт, çурт, кил, пил.
3. Чӳрече, сенĕк, кĕреçе, кĕрепле.
4. Мăлатук, кăчкă, пăчкă, сава.
5. Йытă, слон, кушак, ĕне.

### Тупмалли юмахсем

1. Хӳри тукмак, шăлĕ шак-шак.
2. Хура йăмăкăн юрри хитре.
3. Вĕçет – чĕнмест, выртать – чĕнмест, вилсен шавлать – чарăнма пĕлмест.
4. Сăмсасăр кăвакал пăр шăтарать.
5. Малтан йăлтăркка, кайран кăлтăркка.

***Маша ОРЛОВА.***
Йĕпреç районĕ,
Çăкалăх.

### Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр

Тĕслĕх: Юрă – чун уççи.
1. Юлташсăр çын ... .
2. Юлташна ан пăрах ... .
3. Туслăх çынна ... .
4. Ырри усала ... .
5. Ырă вăрлăхран ... .
6. Хуйхă-суйхă ... .
7. Çăкăртан асли ... .
8. Çăкăр тутине ... .
9. Хура çăкăр çиекен ... .
10. Тăван йăваран хакли ... .
11. Тăван çĕрĕн тусанĕ те тăван, ... .
12. Тăван çĕр-шывра ... .

***Маша ЛУКИЯНОВА.***
Йĕпреç районĕ,
Çăкалăх шкулĕ.